Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

КПСС Чăваш обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн
тата Министрсен Совечĕн органĕ

Орган Чувашского обкома КПСС, Верховного Совета
и Совета Министров Чувашской АССР

№ 27 (20160) • Кĕçнерникун, 1990 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ • Хаçат 1918 çулхи февральтенпе тухать • Хакĕ 3 пус

КАÇАЛХИ МАРТĂН 4-МĔШĔНЧЕ
СУЙЛАВ УЧАСТОКНЕ КАЙСА,
РСФСР, ЧĂВАШ АССР
ТАТА ВЫРĂНТИ СОВЕТСЕН
ХАЛĂХ ДЕПУТАЧĔСЕМ ЧĂННИПЕХ
КАМСЕМ ПУЛМА ТИВĔÇЛĔ
ПИРКИ ХАМĂР ШУХĂША ТАТСА
КАЛИЧЧЕН ПĔР УЙĂХ ЫТЛАРАХ ÇЕÇ
ЮЛЧĔ. ÇАВĂНПА ХАЛĔ,
КАНДИДАТСЕМПЕ
ПАЛЛАШНĂ ВĂХĂТРА, ХУМХАНАТПĂР:
МĔНЛЕ ÇЫНСЕМ ВĔСЕМ?
ХĂШĔСЕМ ШАНĂÇА ТӲРРĔН КАЛАРМА—
ХАЛĂХА ПĔТĔÇТЕРСЕ, ЯПĂХЛАНСА
КАЙНĂ ПУРНĂÇА
ÇĔНĔТСЕ ЛАЙĂХЛАТАССИШĔН
КĔРЕШĔВЕ ÇĔКЛЕМЕ ПУЛТАРĂÇÇĔ?
ТĔПĔР МАЙЛА КАЛАСАН,
ХĂЙСЕМ ÇИНЕ ОТВЕТЛĂХА ИЛМЕ,
ĔÇЕ КИРЛĔ-ПЕК ЙĔРКЕЛЕМЕ
ĂС, ВĂЙ ÇИТЕРĔÇÇĔ-И?

Суйлав умĕн

Çак пăшăрханулă сăмахсене итленĕ хыççăн çапла шутласа илтĕм: çӳлтен хушасса-каласса кĕтсе тăма çав-çавах пăрахман-ха эпир, пирĕншĕн такамсем шутласса, депутата суйлама кандидат тупса парасса кĕтетпĕр. Политика ĕçĕнче çеç мар, производствăра та сисĕнет çав туртăм. Калăпăр, çĕнине, усăллине хамăр шырамастпăр, пуçлăхсем кăтартса парасса, тума хушасса шанса пурăнатпăр. Çĕнетӳ пуçланнăранпах парти пире производствăра та, общество пурнăçĕнче активлăрах пулма чĕнет, çав тĕллевпе уççăнлăхпа демократие анлăн сарса ячĕ. Анчах экономикăпа социаллă пурнăçри улшăнусемпе ăнăçлăх хамăртан килнине эпир çав-çавах кирлĕ таран ăнланса çитерейместпĕр-ха, çитменлĕхсемпе килĕшсе тăратпăр.

Суйлавçăсен хăйсен те активлăх кăтартмалла. Шупашкарти Складской проезд урамра 7-мĕш çуртра пурăнакан В. Мокрановпа калаçрăм. Çемйипе çиччĕн. Иртнĕ суйлавра

Пĕрле калаçар-ха

ХАМĂРТАН КИЛЕТ

Халăх депутачĕсемпе паллаштарас ĕçре, паллах ĕнтĕ, суйлавçăсене пулăшу кирлĕ. Агитаторсемпе политинформаторсем, ытти идеологи активĕ, массăллă информаци хатĕрĕсем, округсемпе хуласенчи, районсенчи, поселоксемпе ялсенчи суйлав комиссийĕсем пулăшмалла. Çитес суйлав парти органĕсем влаçа Советсене мĕн таран панине катартса парать. Çавăнпа хальхи вăхăтри политика ĕçĕ нихçанхинчен те ответлăрах. Çавна тивĕçлипе шута илнĕ-и? Татсах каламалла — çук, шута илмен. Вырăнти политика ĕçне йĕркелесе пыракан орган пулса тăнă çĕртех парторганизацисенчен чылайăшĕ ĕлĕкхи сулăмпах пырать, хальхи вăхăтра обществăри лару-тăру та, çынсем те пачах урăхлине асра тытмасть. Депутата суйлама кандидатсем суйласа илнĕ вăхăтрах хăшпĕр çĕрте çынсене хăйсен шухăш-кăмăлне туллин палăртма май туса пама тăрăшмарĕç. Сăмахран, Шупашкарти В. И. Чапаев ячĕпе хисепленекен производство пĕрлешĕвĕнчи парткома илĕпĕр. РСФСР тата Чăваш АССР халăх депутачĕсене суйлама кандидатсем тăратнă чух ку ответлăран та ответлă ĕçе суйлавçăсене май килнĕ таран ытларах хутшăнтарассишĕн тăрăшни пулман. Калăпăр, «Ровесник» Культура çуртĕнче пуху ирттернĕ чух, [illegible] сем патне хурав тăратса тухнă. Чапаевски поселокра микрорайонти общественность представителĕсене те, пичет работникĕсене те шала кĕртмен. Ыйтас килет: мĕншĕн пухăва халăх чылай ытларах шăнăçакан «Салют» Культура çуртĕнче ирттермелле пулман? Ĕлĕкхиллех хăтлании мар-и ку — депутата суйлама кандидатсем тăратнă чух та пухăва пит ĕ лапкăн, ятне тумалла çеç ирттерме хăтланни, халăх шухăш-кăмăлне итлесе пĕлме тăрăшманни?

В. И. Чапаев ячĕпе хисепленекен производство пĕрлешĕвĕнчи партком суйлав умĕнхи политика ĕçне мĕнле витĕм кӳни пирки шутласан та çакна та калас килет: суйлав умĕнхи пухусем куçна производство канашлăвĕ евĕр, çынсене хăйсен шухăш-кăмăлне туллирех палăртмалли майран тесе ниепле те калаймастăн. Чернышевски 60-мĕш суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн [illegible] ывăлне çеç суйлава тыма чĕнсе хут ячĕç, тет. Агитаторсем ыттисене чĕнме «манса кайни» пысăк çитменлĕх ĕнтĕ. Анчах Валентин Васильевичăн, çулланнă май йĕркене лайăх пĕлекен çыннăн, мĕншĕн суйлав участокне кайса хăйсене суйлавçăсен списокне кĕртнине-кĕртменнине тĕрĕслемелле пулман?

Çак шухăша малалла тăсса, тата акă мĕн çинчен калас килет. Чăннипех те ĕçлеме пултаракан çынсене суйласа илессишĕн халĕ — кандидатсемпе тĕл пулнă чух — уйрăмах тăрăшмалла. Пухусенче тĕл пулнă вăхăтра кандидатсен платформипе паллашнă, вĕсен сăмахне итленĕ май, хăшĕ мĕнле çын иккенне уççăнах курма пулать. Анчах тĕлпулусене кашни суйлавçах хутшăнаймасть. Çавăнпа депутата суйлама кандидата тăратнă çынсен пурнăç çулĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, платформипе тĕплĕн паллаштарас ĕçре агитаторсен, ытти идеологи работникĕсен ролĕ пысăк. Çавна пĕлсе тăрсах Çĕрпӳ районĕнче хăшпĕр парторганизацисем агитколлективсене вăхăтра йĕркелемен, теприсене ячĕшĕн çеç туса хунă. Агитколлективсем хăйсен куллентхи ĕçĕнче общество пурнăçĕнчи хальхи уйрăмлăхсене шута илмеççĕ. КПСС обкомĕн бюровĕн ларăвĕнче сӳтсе явиччченех районти агитаторсенчен чылайăшĕ суйлав умĕнхи политика ĕçне пуçăнман. «Пелу» обществăн районти организацийĕ парторганизацисене суйлав умĕнхи ăнлантару ĕçĕнче хăйĕн майĕсемпе кирлĕ пек пулăшмасть.

Унченхи вăхăтри суйлавсемпе танлаштарсан, пĕлтерпе каçалхи тĕпрен уйрăлса тăрасçĕ. Пĕтĕм влаçа парти Советсене панă май, суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче уççăнлăхпа демократи — тĕп вырăнта. Çĕнĕ йĕрке суйлавçăсене хăйсен кандидачĕсемшĕн пĕр чармавсăр агитацилеме ирĕк парать. Пухусемпе митингсем ирттерме çуртсем уйăраççĕ, суйлав умĕнхи агитаци ĕçне туса пыма массăллă информаци хатĕрĕсемпе усă курма майсем туса параççĕ. Суйлавçăсен депутата суйлама тăратнă кандидатăн политикăпа ĕçри пахалăхĕсене пур енчен те сӳтсе явма пултараççĕ. Пу-

Вулакан шухăшĕ

Пуш сăмах ăстисем

ХАЛĔ МАССĂЛЛĂ ИНФОРМАЦИ ХАТĔРĔСЕНЧЕ СУЙЛАВ ПИРКИ НУМАЙ ÇЫРАÇÇĔ. «КУ СУЙЛАВ ЧĂН-ЧĂН ДЕМОКРАТИЛЛĔ СУЙЛАВ ПУЛАТЬ», — ТЕНИНЕ ЧАС-ЧАСАХ ИЛТМЕ ПУЛАТЬ. АНЧАХ СОВЕТСЕНЕ СУЙЛАМА ТĂРАТНĂ КАНДИДАТСЕМ, КАНДИДАТСЕНЕ ТĂРАТМАЛЛИ ЙĔРКЕ ЧЫЛАЙ ШУХĂШЛАТТАРАТЬ ПИРЕ, СУЙЛАВÇĂСЕНЕ.

«СОВЕТА чи лайăх, пултаруллă çынсене суйлăпăр», — тесе хавхалантараççĕ. Çавăн пекех пулĕ-ши? Манăн, Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕн, ку вăл çамаллăтайланса сăмах ваклани çеç тесе калама тĕрлĕрен сăлтавсем пур.

Акă, Чăваш АССР депутачĕ пулма Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн генеральнăй директорне Капитонова кандидата тăратрĕç. Ыйтас килет: Капитоновсăр пуçне, пирĕн Шупашкарта урăх çын çук-ши? Темиçе уйăх каялла ăна СССР халăх депутатне суйлама тăратнăччĕ. Суйлавçăсенчен ытларахăшĕ ăна хирĕç сасăларĕçке. Çакна манма елкĕрчĕç-ши? Куратпăр ĕнтĕ, халĕ те халăха «хăйсен кандидачĕсене» сĕнес йăла пирĕн хушăра пĕтмен-ха. Çав йăлана пулах вырăнти Советсене предприятисен пуçлăхĕсене, чăвашсем мар, тăстан аякран килнĕ çынсене суйласа яраççĕ. Лешсем вара, вырăнти условисене пĕлменскерсем, апла та, капла та туса пăхаççĕ, хуçалăхсене йăлăхтарса, юхăнтарса яраççĕ. Чăваш халăхĕ çине урла пăхни те тĕл пулать. Вĕсем чăваш культурипе интересленмеççĕ.

Шупашкар хулинче хула тата виçĕ район Совечĕ пур. Çав Советсен пуçлăхĕсенчен пĕри çеç чăваш. Ман шутпа, çавăнпах хула тата Калинин, Ленин районĕсен Совечĕсем хула хуçалăхне пĕтĕмпех юхăнтарса ячĕç. Ку районсенче пурăна-

ĂМĂРТУРА МАЛТА ПЫРАКАНСЕМ

Пысăк тĕллев

Çĕрпӳ районĕнчи выльăх-чĕрлĕх пăхакансем пĕлтĕр сĕт-çу туса илессине палăрмаллах ӳстернĕ. Районти вунă ĕнешĕр доярка кашни ĕнерен 4 пин килограмм ытла сĕт суса илме пултарнă. Пархатарлă юхăм анлăн сарăлса пырать. Çак кунсенче совхоз-техникумри, ялхуçалăх сăнав станцийĕнчи тата ытти хуçалăхсенчи дояркăсем кашни ĕнерен талăкра 10 килограмран кая мар сăваççĕ.

Аркадий Иванов (çӳлти ӳкерчĕк) совхоз-техникумăн Анатри Кипекçери сĕт-çу ферминчи слесарь-оператор. Кунта 200 ĕне. А. Иванов ĕçе аван йĕркеленĕ. Сĕт пăрăхĕсене тата фермăри ытти оборудование йĕркеллĕ тытать, вăхăтра юсать. Çак фермăри Анна Шугулева, Вера Николаева, Александра Максимова тата Рева Иванова дояркăсем кашни ĕнерен тăватă пин килограмм ытла сĕт суса илнĕ.



Аялти ӳкерчĕкре — Чăваш ялхуçалăх сăнав станцийĕн Лапра ферминчи Нина Павлова доярка, Эльвира Васильева зоотехник, Нина Андреева доярка, Ангелина Андреева бригадир тата Ольга Емельянова зоотехник. Вĕсем те пысăк ĕмĕтпе ĕçлеççĕ.

С. ИГНАТЬЕВ.

Фотоӳкерчĕкĕсем авторăн.

ОБЛПРОФСОВЕТĂН ОТВЕТЛĂ РАБОТНИКĔСЕМ
ЕÇÇЫННИСЕНЕ 1990 ÇУЛХИ ФЕВРАЛЬТЕ ЙЫШĂНМАЛЛИ

ГРАФИК

Йышăну кунĕ	Ячĕ, ашшĕ ячĕ, хушамачĕ	Кам пулса ĕçлет

ЧĂВАШ АССР МИНИСТРСЕН СОВЕЧĔН
ОТВЕТЛĂ РАБОТНИКĔСЕМ 1990 ÇУЛХИ
ФЕВРАЛЬТЕ ЕÇÇЫННИСЕНЕ ХАРПĂР ХĂЙ
ЫЙТĂВĔСЕМПЕ ЙЫШĂНМАЛЛИ

ГРАФИК

Кунсем	Ячĕ, ашшĕ ячĕ, хушамачĕ	Кам пулса ĕçлет

малла. Çитес суйлав парти органĕсем влаçа Советсене мĕн таран паяние катартса парать. Çавăнпа хальхи вăхăтри политика ĕçĕ шыхçаннинчен те ответлăрах. Çавна тивĕçлипе шута илнĕ-и? Тăтсах каламалла — çук, шута илмен. Вырăнти политика ĕçне йĕркелесе пыракан орган пулса тăнă çĕртех парторганизацисенчен чылайăшĕ ĕлĕкхи сукмакпах пырать, хальхи вăхăтра обществăри лару-тăру та, çынсем те пачах урăхлине асра тытмасть. Депутата суйлама кандидатсем суйласа илнĕ вăхăтрах хăшпĕр çĕрте çынсене хăйсен шухăш-кăмалне туллин палăртма май туса пама тăрăшмарĕç. Сăмахран, Шупашкарти В. И. Чапаев ячĕпе хисепленекен производство пĕрлешĕвĕнчи парткома илĕпĕр. РСФСР тата Чăваш АССР халăх депутачĕсене суйлама кандидатсем тăратнă чух ку ответлăран та ответлă ĕçе суйлавçăсене май килнĕ таран ытларах хутшăнтарассишĕн тăрăшни пулман. Калăпар, «Ровесник» Культура çуртĕнче пуху ирттернĕ чух, çынсем [illegible] сем патне хурал тăратса тухнă, Чапаевски поселокри микрорайонти общественность представителĕсене те, пичет работникĕсене те шала кĕртмен. Ыйтас килет: мĕншĕн пухăва халăх чылай ытларах шăнаçакан «Салют» Культура çуртĕнче ирттермелле пулман? Ĕлĕкхиллех хăтланни мар-и ку — депутата суйлама кандидатсем тăратнă чух та пухăва питĕ лăпкăн, ятне тумалла çеç ирттерме хăтланни, халăх шухăш-кăмалне итлесе пĕлме тăрăшманни?

В. И. Чапаев ячĕпе хисепленекен производство пĕрлешĕвĕнчи партком суйлав умĕнхи политика ĕçне мĕнле витĕм кӳни пирки шутлатăн та çакна та калас килет: суйлав умĕнхи пухусем кунта производство канашлăвĕ евĕр, çынсене хăйсен шухăш-кăмалне туллинрех палăртмалли вырăн тесе шеппе те калаймастăн. Чернышевски 60-мĕш суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне халăх депутачĕ суйлама кандидатсем тăратнă чух каллех пухăва хайхи пĕчĕк «Ровесник» Культура çуртĕнчех ирттернĕ. Ку округри суйлавçăсем çуррине яхăн çĕнĕ микрорайонта пурăнакансем пулин те, заводра ĕçлекенсене кăна чĕннĕ. Пуху хăçан пуласси çинчен пĕлтерӳ те çакман. Кандидата тăратнă çынсенчен пĕрин пуху вăхăтĕнче Мускав район Совечĕн сессине каймалла тивнĕ. Кандидатсене пухура хăйсен программипе паллаштарма пĕр пек май туса паман.

Çакăн пек ĕç суйлавçăсен активлăхне ӳстерме пулăшать-и-ха? Паллах, çук. Вĕсен шухăш-кăмалне шута илменни çынсене хисеплеменнипе пĕрех. Уççăнлăхпа демократие аталантарас, вĕсен майĕпе туллин усă курса, çынсен производствăри, общество пурнăçĕнчи активлăхне ӳстерес тесе хальхи вăхăтра уйрăмах тăрăшатпăр. Çав-çавах командăпа административлă меслетсемпех ĕçлесе, халăха çĕнетеве çирĕп ĕненсе тăма чармастпăр-и? Шанăçне çухатмастпăр-и?

Çапла шутлама сăлтав пур. Нумаях пулмасть Шупашкарти Пĕрремĕш Якимовски урамра 27-мĕш çуртра пурăнакан Л. Трушинапа калаçма тӳр килчĕ. Халăх депутатне суйлама кандидатсем тăратасси вĕçленни чылай пулать — вăл хăйсен округĕнче камсене кандидата тăратнине пĕлмест. Иртнĕ суйлавра та СССР халăх депутатне суйлама кандидата тăратнине суйлав кунĕччченех пĕлмен. Çавна май Л. Трушина акă мĕн каларĕ: мĕншĕн ăна та, асăннă урамра пурăнакан ытти çынсене те депутата суйлама камсене кандидата тăратнине вăхăтра пĕлтермеççĕ?

Çак шухăша малалла тăсса, тата [illegible] çинчен калас килет. Чăннипех те çĕнелеме пултаракан çынсене суйласа илессишĕн халĕ — кандидатсемпе тĕл пулнă чух — уйрăмах тăрăшмалла. Пухусенче тĕл пулнă вăхăтра кандидатсен платформипе паллашнă, вĕсен сăмахне итленĕ май, хăшĕ мĕнле çын иккенне уççăнах курма пулать. Анчах тĕлпулусене кашни суйлавçах хутшăнаймасть. Çавăнпа депутата суйлама кандидата тăратнă çынсен пурнăç çулĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, платформипе тĕплĕн паллаштарас ĕçре агитаторсен, ытти идеологи работникĕсен ролĕ пысăк. Çавна пĕлсе тăрсах Çĕрпӳ районĕнче хăшпĕр парторганизацисем агитколлективсене вăхăтра йĕркелеймен, теприсене ячĕшĕн çеç туса хунă. Агитколлективсем хăйсен кулленхи ĕçĕнче общество пурнăçĕнчи хальхи уйрăмлăхсене шута илмеççĕ. КПСС обкомĕн бюровĕн ларăвĕнче сӳтсе явиччченех районти агитаторсенчен чылайăшĕ суйлав умĕнхи политика ĕçне пуçăнайман. «Пĕлӳ» обществăн районти организацийĕ парторганизацисене суйлав умĕнхи ăнлантару ĕçĕнче хăйĕн майĕсемпе кирлĕ пек пулăшмасть.

Унччченхи вăхăтри суйлавсемпе танлаштарсан, пĕлтĕрпе кăçалхи тĕпрен уйрăлса тăраççĕ. Пĕтĕм влаçа парти Советсене панă май, суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче уççăнлăхпа демократи — тĕп вырăнта. Çĕнĕ йĕрке суйлавçăсене хăйсен кандидачĕсемшĕн пĕр чăрмавсăр агитацилеме ирĕк парать. Пухусемпе митингсем ирттерме çуртсем уйăраççĕ, суйлав умĕнхи агитаци ĕçне туса пыма массăллă информаци хатĕрĕсемпе усă курма майсем туса параççĕ. Суйлавçăсен депутата суйлама тăратнă кандидатан политикăпа ĕçри пахалăхĕсене пур енчен те сӳтсе явма пултараççĕ. Пухусенче, пичетре, телевиденипе радио передачисенче кандидатсене ырласа е вĕсене хирĕç калама право пур. Паллах ĕнтĕ, ырлани те, критика та тĕрĕс пулма тивĕçлĕ. Кӳрентерессипе, ята вараласси ан пултăр. Кун пек меслет политика ĕçĕнче уйрăмах киревсĕр. Çавна май суйлавçăсен акă мĕн пĕлмелле: ирĕксĕрлесе, улталаса, хăратса е урăх майпа усă курса, граждансене халăх депутатне суйламалли тата суйланмалли правăпа ирĕклĕн усă курма чăрмантаракансене законпа çирĕплетнĕ йĕркепе ответ тыттараççĕ. Çавăн пекех депутата суйлама тăратнă кандидат пирки пичет урлă е урăх майпа суя сăмах саракансен те Закон тăрăх ответ тытма тивет. Çакна агитаторсен суйлавçăсене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Суйлав вăл — халăхăн анлăран та анлă сийĕсемшĕн демократи шкулĕ, политика культурине вĕрентмелли шкул. Государство влаçĕн тĕрлĕ шайри органĕсене депутатсем — хамăра малашне ертсе пыма тивĕçлĕ çынсем — суйласа илнĕ май, пирĕн вĕсен организаторла пултарулăхĕпе çĕнелĕх туйăмĕ, çĕршыва халăх умĕнчи ответлăхĕ, пуçарулăхĕ пуррине çуккине палăртмалла, çавна халь пĕлсе, суйлавра йăнăшмалла мар. Йăнăшрăмăр, тĕрĕс мар турăмăр-тăк, тӳрлетме чылай йывăртарах, вăхăт та кирлĕ.

Тепĕр хут калас килет: депутата суйлама тăратнă кашни кандидат пиркиех паян, ырана хăвармасăр, пурте тĕплĕн шутласа пăхар, суйлава кашниех хутшăнса, хамăран татăклă сăмаха калар. Ку вăл çĕнетӳ çĕнтертĕр, пирĕн пурнăçа лайăхлаттăр тесе тунă ĕç пултăр.

И. МАТРОСОВ,
редакцин идеологи пайĕн заведующийĕ.

ма тĕрлерен сăлтавсем пур.

Акă, Чăваш АССР депутачĕ пулма Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн генеральнăй директорне Капитонова кандидата тăратрĕç. Ыйтас килет: Капитоновсăр пуçне, пирĕн Шупашкарта урăх çын çук-шим? Темиçе уйăх каялла ăна СССР халăх депутатне суйлама тăратнăччĕ. Суйлавçăсенчен ытларахăшĕ ăна хирĕç сасăларĕç. Çакна манма ĕлкĕрчĕç-шим? Куратпăр ĕнтĕ, халĕ те халăха «хăйсен кандидачĕсене» сĕнес йăла пирĕн хушăра пĕтмен-ха. Çав йăлапа пулах вырăнти Советсене предприятисен пуçлăхĕсене, чăвашсене мар, тăван [illegible] сене суйласа яраççĕ. Лешсем вара, вырăнти условисене пĕлменскерсем, апла та, капла та туса пăхаççĕ, хуçалăхсене ялăхтарса, юхăнтарса яраççĕ. Чăваш халăхĕ çине урла пăхни те тĕл пулать. Вĕсем чăваш культурипе интересленмеççĕ.

Шупашкар хулинче хула тата виçĕ район Совечĕ пур. Çав Советсен пуçлăхĕсенчен пĕри çеç чăваш. Ман шутпа, çавăнпах хула тата Калинин, Ленин районĕсен Совечĕсем хула хуçалăхне пĕтĕмпех юхăнтарса ячĕç. Ку районсенче пурăнакансем пуçлăхсем çине шанчăксăррăн пăхаççĕ. Пăшăрханма сăлтав пур. Хăшпĕр ыйтусене темиçе çул татса параймаççĕ. Пĕр тĕслĕх илсе кăтартам. Ленин райĕçтăвком председателĕ Л. Шимин икĕ çул каялла Хусанкай урамĕнчи 25-мĕш çурт умĕнчи автобус остановкине çӳлерех куçарăпăр тесе сăмах пачĕ, анчах паянччченех вăл хăйĕн вырăнĕнчех.

Нумай пулмасть вырăнти радиопа Калинин райсовечĕн председателĕ И. Баскаков тухса каларĕ. Районти предприятисем, вăл каланă тăрăх, плансене ирттерсе тултарнă. Халăх валли 20 процент нумайрах тавар кăларнă. Пире вăл сăмах çапла мар, магазинсенче пурри кирлĕ. Вĕсем вара хăçан пуласси те паллă мар.

Л. Шиминпа И. Баскаков пек хитре калаçакансем пирĕн хулара сахал мар-ха. Пире чылай çулсем хушши çукран пур туса лăплантарса пурăнчĕç. Çынсем ун пеккисене пĕлсе çитрĕç, хальхинче халăхшăн тăрăшакансене кăна Советсене суйлăпăр.

Г. НИКИФОРОВ,
ĕç тата вăрçă ветеранĕ.

ОБЛПРОФСОВЕТĂН ОТВЕТЛĂ РАБОТНИКĔСЕМ
ĔÇÇЫННИСЕНЕ 1990 ÇУЛХИ ФЕВРАЛЬТЕ ЙЫШĂНМАЛЛИ

ГРАФИК

Йышăну кунĕ	Ячĕ, ашшĕ ячĕ, хушамачĕ	Кам пулса ĕçлет
19	**В. П. Петин**	**Председатель**
5	**Л. Г. Захаров**	**Секретарь**
26	**В. В. Хомскова**	**Секретарь**
12	**П. В. Ивантаев**	**Секретарь**
14	**В. А. Алексеев**	**Оргинструкторски пайĕн заведующийĕ**
1,17	**В. Д. Пискунов**	**Производствăллă-массăллă ĕçпе ĕç укçи пайĕн заведующийĕ**
2,16	**И. М. Лепехов**	**Воспитани ĕçĕпе культура тата спорт пайĕн заведующийĕ**
9,23	**Л. Н. Гаврикачева**	**Ĕçĕн право инспекцийĕн заведующийĕ**
6,21	**Г. А. Ямолдин**	**Ĕç сыхлавĕн пайĕн заведующийĕ**
3,20	**С. Н. Сергеев**	**Государство социаллă страховани пайĕн заведующийĕ**
10	**В. П. Блябкин**	**Пурăнмалли çурт-йĕрпе йăла пайĕн заведующийĕ**
13,24	**Н. Ф. Васильев**	**Финанс пайĕн заведующийĕ**
7,22	**А. А. Андреев**	**Контрольпе ревизи пайĕн заведующийĕ**
15,27	**П. Г. Мурайкин**	**Юрист консультацийĕн заведующийĕ**
28	**И. П. Белков**	**Çырусен тата ĕççыннисене йышăнакан пай заведующийĕ**
8	**А. А. Арсентьев**	**Ĕçсен управляющийĕ**

Ĕççыннисене çак вăхăтра йышăнаççĕ: ĕç кунĕсенче — 14 сехетрен пуçласа 19 сехетчен, шăматкунсенче — 9 сехетрен пуçласа 14 сехетчен.

Пайсем ĕç кунĕсенче 9 сехетрен пуçласа 18 сехетчен йышăнаççĕ.

Облпрофсоветпа 23-04-31 телефонпа тӳрремĕн çыхăнма пулать. Вăл талăкĕпех ĕçлет.

ЧĂВАШ АССР МИНИСТРСЕН СОВЕЧĔН
ОТВЕТЛĂ РАБОТНИКĔСЕМ 1990 ÇУЛХИ
ФЕВРАЛЬТЕ ĔÇÇЫННИСЕНЕ ХАРПĂР ХĂЙ
ЫЙТĂВĔСЕМПЕ ЙЫШĂНМАЛЛИ

ГРАФИК

Кунсем	Ячĕ, ашшĕ ячĕ, хушамачĕ	Кам пулса ĕçлет
1.	**Г. В. Степанов**	**Халăха вĕрентес ĕç, культура, сывлăха сыхлас тата социаллă пулăшу парас ĕç пайĕн тĕп специалисчĕ.**
2.	**Ю. К. Никандров**	**Промышленность пайĕн заведующийĕ**
3.	**П. М. Митрофанов**	**Министрсен Совечĕн Ĕçĕсен управляющийĕ**
5.	**Р. И. Ерусланова**	**Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ.**
7.	**В. М. Герасимов**	**Агропромышленность комплексĕн пайĕн тĕп специалисчĕ.**
8	**М. Г. Андронов**	**Капитальнăй строительствăпа пурăнмалли çурт-йĕр тата коммуналлă хуçалăх пайĕн заведующийĕ.**
9.	**Ю. К. Никулин**	**Советсен ĕç тăвакан органĕсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пай заведующийĕ.**
10.	**В. А. Агафонов**	**Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ.**
12.	**Н. А. Зайцев**	**Министрсен Совечĕн председателĕ**
14.	**Г. Я. Стексов**	**Сутă-илӳ, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕç, транспорт тата çыхăну пайĕн заведующийĕ.**
15.	**В. М. Герасимов**	**Агропромышленность комплексĕн пайĕн тĕп специалисчĕ.**
16.	**Ю. К. Никандров**	**Промышленность пайĕн заведующийĕ.**
17.	**П. М. Митрофанов**	**Министрсен Совечĕн Ĕçĕсен управляющийĕ.**
19.	**А. С. Аверкин**	**Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ.**
21.	**Ю. К. Никулин**	**Советсен ĕç тăвакан органĕсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пай заведующийĕ.**
22.	**М. Г. Андронов**	**Капитальнăй строительствăпа пурăнмалли çурт-йĕр тата коммуналлă хуçалăх пайĕн заведующийĕ.**
23.	**В. М. Герасимов**	**Агропромышленность комплексĕн пайĕн тĕп специалисчĕ.**
24.	**Н. М. Кузнецов**	**Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ.**
26.	**В. К. Койсаренко**	**Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ**
28.	**Г. Я. Стексов**	**Сутă-илӳ, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕç, транспортпа çыхăну пайĕн заведующийĕ.**

Граждансене Министрсен Совечĕн йышăну пӳлĕмĕнче, Советсен çуртĕн иккĕмĕш корпусĕнче, иккĕмĕш хутра — 223 пӳлĕмре йышăнаççĕ.

Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕсемпе, пай заведующийĕсемпе тата тĕп специалистсемпе çыхăну тытмалли телефонсем: 11 сехетрен пуçласа 13 сехетчен — 22-34-53, шăматкунсенче — 8 сехет çурăран пуçласа 10 сехетчен.

Йышăнăва пымашкăн малтан 22-34-53 телефонпа шăнкăравласа çырăнмалла.

Йышăну вăхăчĕ: ĕç кунĕсенче — 14 сехетрен пуçласа 18 сехетчен, шăматкунсенче — 10 сехетрен пуçласа 14 сехетчен.

Февралĕн 13 тата 27-мĕшĕсенче 11 сехетрен пуçласа 18 сехетчен граждансене пирĕн республикăра 1930—1940 çулсенчи тапхăрта тата 1950 çулсен пуçламăшĕнче сăлтавсăрах хĕсĕрленине пула инкек тӳснисен ырă ятне тавăрас енĕпе ĕçлекен комиссин членĕсем йышăнаççĕ.

АГРОНОМСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

РЕСПУБЛИКĂРИ ÇĔР ĔÇЧЕНĔСЕМ ИРТНĔ ÇУЛ КАШНИ ГЕКТАРТАН 18,9 ЦЕНТНЕР ТĔШТЫРĂ, 105 ЦЕНТНЕР ÇĔРУЛМИ, 139 ЦЕНТНЕР ПАХЧАÇИМĔÇ, 436 ЦЕНТНЕР ВЫЛЬĂХ КĂШМАНĔ, 300 ЦЕНТНЕР СИЛОСЛĂХ КУЛЬТУРĂСЕМ, 11 ЦЕНТНЕР ХĂМЛА ПУХСА ИЛНĔ. НУМАЙ РАЙОН, КОЛХОЗПА СОВХОЗ, ÇАВĂН ПЕКЕХ, РЕСПУБЛИКА ТА, МАЛТАН ПАЛĂРТНĂ ТĔЛЛЕВСЕНЕ ПУРНĂÇЛАЙМАН.

ПĔЧĔК тухăç илнин сăлтавне çанталăк условийĕсемпе çеç ăнлантарни тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Пĕр пек условисенчех, юнашар вырнаçнă хуçалăхсемпе районсенче тухăç тĕрлĕрен. Акă, Йĕпреç районĕнчи «Красный фронтовик» колхоз кашни гектартан 28,8 центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ. Çав вăхăтрах çак районти «Новая сила» колхозра тухăç 9 центнер е виçĕ хут пĕчĕкрех пулнă.

Республикăри колхозсемпе совхозсенче гектар вăйне мĕнле ӳстермелле? Усă курман резервсем пур-и? Çакăн çинчен калаçрĕç республикăри агрономсен икĕ куна пынă наукăпа производство конференцийĕнче. Вăл январĕн 30—31-мĕшĕнче Шупашкарта, КПСС обкомĕн Политвĕренӳ çуртĕнче пулса иртрĕ. Конференцие, кĕске сăмах каласа, республика Министрсен Совечĕн председателĕн пĕрремĕш заместителĕ В. А. Агафонов уçрĕ. Вăл, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Указĕпе килĕшӳллĕн, Чăваш АССР апат-çимĕç тата продукци сутăн илес ĕç министрĕ пулма В. С. Краснова çирĕплетни çинчен пĕлтерчĕ.

Конференцире Çĕрĕç эффективлăхне тата уй-хир продукчĕсем туса илессине ӳстерес тĕлĕшпе умра тăракан задачăсене сӳтсе явнă.

«Подмосковье» наука-производство пĕрлешĕвĕн пай заведующийĕ, ялхуçалăх наукисен докторĕ К. И. Саравин çĕрĕçĕнче тăпрана хӳтĕлемелли системăна çĕнетсе улăштармалли çул-йĕр, çак пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕн заместителĕ В. Г. Егоров ялхуçалăх культурисем акса ӳстермелли машинăсемпе, машина-трактор паркĕсемпе тухăçлăрах усă курасси çинчен каласа пачĕç.

Тăпра пулăхне ӳстермелли çул-йĕрпе минераллă удобренисен ыйтăвĕпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри проектпа технологи наука тĕпчев институчĕн директорĕ, ялхуçалăх наукисен докторĕ Н. П. Кузнецов, тăпрара кăпкалатмалли технологири çĕнĕлĕхсемпе Ульяновскри ялхуçалăх наука-тĕпчев институчĕн çĕрĕç пайĕн заведующийĕ К. И. Карпович паллаштарчĕç.

Чăваш ялхуçалăх институчĕн кафедра заведующийĕ, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ Г. К. Алексеев, çак институтăн çĕрĕç кафедрин заведующийĕ, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ А. Г. Ванифатьев республикăра тĕштырă тухăçне ӳстермелли резервсем çинче чарăнса тăчĕç.

Чăваш ялхуçалăх сăнав станцийĕн аслă наука сотрудникĕ, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ М. В. Владимиров çĕрулми тухăçне ӳстермелли резервсем çинчен каласа пачĕ.

Пĕрремĕш кун, çавăн пекех, Улатăрти совхоз-техникумăн главнăй агрономĕ, аренда коллективĕн руководителĕ Н. В. Крулькин, Йĕпреç райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Г. Р. Яковлев хăйсен ĕçре пухнă опычĕпе паллаштарчĕç.

Иккĕмĕш кун конференцире выльăх апачĕ туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри наука-тĕпчев институчĕн директор заместителĕ, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ В. А. Ташилин лекци вуларĕ. Çак институтăн аслă наука сотрудникĕсем К. Н. Приваловапа А. А. Панов улăх-çарансемпе интенсивлă усă курасси тата выльăх апачĕ хатĕрлемелли прогрессивлă технологи, ялхуçалăхне механизацилекен Пĕтĕм Союзри наука-тĕпчев институчĕ çумĕнчи «Выльăх кăшманĕ» наука-производство системин руководителĕн заместителĕ, техника наукисен кандидачĕ В. П. Юферов выльăх кăшманне индустри технологийĕпе туса илесси çинчен каласа пачĕç.

Белоруссири çĕрĕçпе выльăх апачĕ наука тĕпчев институчĕн аслă наука сотрудникĕсем биологи наукисен кандидачĕсем Н. Г. Сидорович тата Л. П. Барановская тĕштырă культурисен тухăçне ӳстерес ĕçри опычĕпе паллаштарчĕç.

Конференцире республикăри «Выльăх апачĕ» наукăпа производство системин руководителĕ, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ М. В. Фадеева, Чăваш ялхуçалăх институчĕн доценчĕ, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ И. Л. Пельцих, Етĕрне районĕнчи «Выльский» совхоз директорĕ Г. В. Федоров, Вăрмар районĕнчи «Ленинский», Шупашкар районĕнчи «XXV съезд КПСС» совхозсен главнăй агрономĕсем Ю. Н. Табаков, Ю. Г. Попов, тухса каларĕç.

Конференцие республикăри колхозсемпе совхозсен руководителĕсем, специалистсем, промышленность предприятийĕсенчи хушма хуçалăхсен руководителĕсем, ялхуçалăх институчĕпе сăнав станцийĕнчи ученăйĕсемпе наука сотрудникĕсем, совхоз-техникумсенчи преподавательсем, çĕрĕçпе çыхăннă ытти отраслĕсенчи специалистсем пухăннă.

Конференцире КПСС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ А. П. Петров тухса каларĕ. Конференци ĕçне республика Министрсен Совечĕн председателĕ Н. А. Зайцев, КПСС обкомĕн секретарĕ М. Я. Якимов хутшăнчĕç.

С. КАРЯГИН.

Парти пурнăçĕ: çĕнетÿ çыннисем

Тĕрĕс çулпа

КУСЛАВККА районĕнче тăхăр совхоз. Тăватă хуçалăхри парторганизацие хĕрарăмсем ертсе пыраççĕ. Çăмăл мар вĕсене хальхи кăткăс условисенче. Çапах та пултараççĕ, тăрăшаççĕ, пĕр-пĕринчен опыт илеççĕ. КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕпе Вениамин Осипович Ягудинпа тĕл пулса калаçрăм. Тăватă секретарьтен хăшĕ лайăхрах ĕçлет, тесе ыйтсан вăл çапла хуравларĕ:

— Чи маттурри пирĕн «Волга» совхозри Нина Корниловна Иванова. Парти райкомĕн бюро членĕ. Вĕри чĕреллĕ, пурнăçа лайăх пĕлекен, çынсемпе ĕçлеме юратакан, шухăшлакан, шыракан, пахине хăвăрт пурнăçа кĕртекен коммунист. Чăн-чăн парти ĕçченĕ вăл. Пленумсенче, канашлусенче час-часах тухса калаçать, бюро ларăвĕсенче ырă сĕнÿсем парать. Хăйне мĕн килĕшмерĕ, ыттисем тĕрĕс мар тунине асăрхарĕ, туйрĕ пулсан, кусран калама хăраса тăмасть. Тепĕр чухне парти райкомĕнче ĕçлекенсене те самаях тустарса илет. Тĕрĕс критиклет. Партин область организацийĕн тата районти парторганизацин конференцийĕсенче те сăмах илчĕ. Коммунистсен авторитетне, парти комитечĕсен кĕрешÿри пултарулăхне ÿстерес ыйтусемпе сивĕч калаçрĕ. Нина Корниловна ертсе пыракан парторганизаци — районта чи лайăххисенчен пĕри.

Çакна эпĕ «Волга» совхоза çитсен аванах туйса илтĕм.

Нина Корниловна тин çеç «Заря» совхозран таврăннă. Кăмăллă хăй. Хавасланса мана çак хуçалăха мĕн сăлтавпа кайса килни çинчен каласа парать. Партком секретарĕ пулса унта Ольга Васильевна Антонова ĕçлет. Стаж пысăк мар унăн. Опыт сахалрах. Çăмăл мар парторганизаци секретарĕн ĕçĕ. Темĕн те пĕлмелле. Тепĕр чухне тĕрлĕрен кăткăс лару-тăрăва та кĕрсе ÿкетĕн. Халăхпа ĕçлеме, унпа пĕр чĕлхе тупма тÿсĕмлĕх, пултарулăх кирлĕ. Пулăшма çÿрет Нина Корниловна Энтрĕ Пасарне, Ольга Васильевнăна партком секретарьне суйласанах туслă çыхăну тытма пуçланă. Парти райкомĕн бюровĕн членĕ пулнă май çакна вăл парти порученийĕ вырăнне хурать. Сахал мар пулăшать çамрăк секретаре Нина Корниловна. Парти докуменчĕсемпе мĕнле ĕçлемеллине вĕрентет, çынсемпе мĕнле пулмалли «вăрттăнлăхне» уçса парать, партин шалти демократине аталантарас ыйтусемпе канашсем парать, коммунистсен пухăвĕсемпе партком ларăвĕсем мĕнле иртнине тишкерет. Паян, акă, фермăри партгруппа ларăвĕнче пулнă, хăй те тухса калаçнă. Коммунистсене «Волга» совхозри партгруппăсен ĕçĕпе паллаштарнă. Ольга Васильевна Елчĕке хăй те темиçе хутчен пырса кайнă.

Парторганизаци пĕчĕк мар, 113 коммунист унта. Борис Мартьянов шоферпа хăмла ăсти Валентина Манекова — парти членĕн кандидачĕсем. Валентина Витальевна çулла хăмла пахчинче, хĕлле вара висĕмçул уçăлнă çĕвĕ пелĕн заведующийĕнче ĕçлет. Аллă çынна яхăн хĕлле валли ĕç тупнă. Сăмах май каласан, çамрăксене металран сетка тăвас ĕçе те хутшăнтарнă.

Цехри организацисем пиллĕк, партгруппăсем тăххăр. Отчетпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа дискусси евĕр иртнĕ. Коммунистсем парти авторитет- кÿме пулăшĕ. «Волга» совхозри парторганизацие опыт илме таçтан та килсе çÿреççĕ. Нумаях пулмасть, акă, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи парторганизаци секретарĕсем, парти райкомĕнче ĕçлекенсем пулнă. Кунта районти партгрупоргсен, цехри организацисен секретарĕсен, пропагандистсен, суйлав комиссийĕсен семинарĕсем интереслĕ, усăллă иртнĕ.

Хуçалăхра халăхшăн тăрăшнине кашни утăмрах сисĕнет. Социаллă пурнăç ыйтăвĕсене татса пама коммунистсем активлă хутшăнаççĕ. Елчĕкре ача садĕ ĕçлет. Аманикре ăна кĕçех туса пĕтереççĕ. Мушарта çĕнĕ клуб ĕçе янă. Çамрăк çемьесем валли, тăкаксен пĕр пайне совхоз тÿлесе, çуртсем тăваççĕ. Шупашкара та, Куславккана та автобуссем çÿреççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли комплексра та, машина-трактор паркĕнче те сауна пур. Комплексра шăл врачĕ, терапевт ĕçлет, кĕçех совхоза ача врачĕ çитмелле. Кадрсем кунта пурте вырăнти çамрăксем. Совхоз шучĕпе халĕ аслă шкулсемпе техникумсенче вунпиллĕкĕн вĕренеççĕ. Пурте яла таврăнаççĕ вĕсем.

Нина Корниловна халăхпа ĕçлемелли тĕрлĕ формăсемпе анлăн усă курать. Партком ларăвĕнче этем факторне анлă çул парас ыйтăва ятарлă сÿтсе явнă. Усси пур-и? Тÿрех калас пулать, сахал мар. Ĕç-пуç вĕçленсен, кашни ялтах урам уявĕ пулса иртет. Хĕрарăмсен советĕнче ĕçлекенсем килрен киле çÿреççĕ, чи тирпейлĕ çурта палартаççĕ. Урам уявĕнче концерт, тĕрлĕ спорт вăййисем пулаççĕ, ачасене савăнăçлă майпа ят хураççĕ, кĕмĕл тата ылтăн туйсем тăваççĕ. Нумаях пулмасть вăтам шкул пĕтернисене, 11 çамрăка савăнăçлă лару-тăрура рабочисен йышне илнĕ. Вĕсене асăнмалăх парнесем панă, яшсемпе хĕрсем çĕре юратма, ашшĕ-амăшĕн йăли-йĕркине малалла тытса пыма тупа тунă. Çулленех ĕçпе юрă уявĕ хаваслă иртет. Фольклор уявĕ пирки ял ĕçченĕсем халĕ те кăмăллă. Ытти çĕртен — Етĕрне, Шупашкар, Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Тăвай районĕсенчен те фольклор коллективĕсем килнĕ. Асăну кунне масарсенче ирттересси йăлана кĕнĕ. Çĕнĕ йăла-йĕрке хăюллăн пурнăçа кĕрсе пырать. Çамрăксем савăнăçлă лару-тăрура мăшăрланаççĕ. Совет Çарне каякансене пĕрле пухăнса ăсатаççĕ, çартан таврăннă çамрăксен каçне интереслĕ ирттереççĕ. Пысăкрах ялсенче хĕрарăмсен совечĕсем йĕркеленĕ. Вĕсен воспитани ĕçĕнчи пĕлтерĕшĕ пысăк. «Волга» совхозри пек вăйлă агиткультбригада таврара урăх çук, терĕç парти райкомĕнче. Музыка шкулĕ ĕçлет. 32 ача вĕренет унта. Вĕреннĕшĕн çуррине совхоз тÿлет. Çул çитмен ачасен клубне уçнă. Тĕрлĕ секци ĕçвĕрентекен кружок уçма хатĕрлет. Халĕ чăваш литературине левеççĕ. Çак пĕтĕм ĕçе партком сумĕнче йĕркеленĕ координаци совечĕ туса пырать.

...Каснă-партнă амăшĕ, терĕç ун пирки ял сыннисем

мар, килти, çемьери пурнăç та интереслентерет ăна. Пĕррехинче мана эрех ĕçнĕ хыççăн курчĕ те пуçне çеç суллаçа илчĕ, ятламарĕ, аса илтермерĕ, тем çав тери намăс пек пулса кайрĕ хама, çавăнтанпа «çылăха» кĕмен», — каласа пачĕ пĕр механизатор. «Тепĕр чухне кăмăл начаррине Нина Корниловна таçтан пĕлет, тейĕн. Кĕрсе тухать те хăвна ун хыççăн çамрăкланнă пекех туятăн. Пĕр-ик ăшă сăмах çеç калать, кăмăл уçăлать санăн. Çын чĕри патне çитме пĕлет. Маттур пирĕн секретарь», — ырласа калаçрĕ ун пирки ялти хисеплĕ çынсенчен пĕри, КПСС членĕ Валентин Павлович Айдаров пенсионер. «Халăхпа ĕçлеме пĕлет. Пуриншĕн те тăрăшать. Ялта ĕçлекен кирек хăш çын та ун кусĕ умĕнче, тейĕн. Савăнмасăр, хумханмасăр мĕнле чăтĕ чун: юлашки вăхăтра медицина учрежденийĕсенче ĕçлекенсене те сума сума пуçларĕç. Медицина работникĕсен кунĕнче пире питĕ лайăх чысларĕç. Уява Атăл хĕрринче ирттертĕмĕр. Совхоз директорĕ, партком секретарĕ, профком председателĕ, партком членĕсем пулчĕç. Чи маттуррисене Хисеп грамотисем пачĕç. Ушкăнпа сăн ÿкерттертĕмĕр. Килсене чĕрĕ чечек çыххисемпе таврăнтăмăр», — пĕр-пĕрипе тупăшсах аса илчĕç фельдшер пунктĕнче ĕçлекенсем. «Урасăр юлтăм эпĕ. Парти пухăвĕсене çÿрейместĕп. Çапах та парторганизацири лару-тăрăва пĕтĕмпех пĕлсе тăратăп. Коммунистсен пухăвĕ е партком ларăвĕ хыççăн ман пата Нина Корниловна кашниччĕ тенĕ пекех кĕр-

мăлланас, каппайланас туйăм ăн пултăр. Пытарма кирлĕ мар: çакă пурин те çитсех каймасть-ха. Ку вăл парторганизаци авторитетне чакарма та пултарать, партиллĕ юлташлăха сиен кÿрет. Партиллĕ юлташлăха çирĕплетмесĕр партин идейăпа организаци тĕлĕшĕнчи пĕрлĕхне вăйлатма, партин шалти демократине аталантарма, коммунистсен тивĕçĕпе ответлăхне ÿстерме май çук. Çакна лайăх ăнланать Нина Корниловна.

«Хальхи кăткăс вăхăтра совхозра парти организацийĕн авторитечĕ мĕнле?» — тесе ыйтсан партком секретарĕ çапла ответлерĕ:

— Юлашки вăхăтра парти çинчен мĕн кăна калаçмаççĕ пулĕ. Вăл çĕршыва тĕрĕс мар çулпа янă, теççĕ. Ăна пĕтерсен, урăхла парти йĕркелеме сĕнекенсем те пур. Тепĕр майлă каласан, пирĕн çĕршывра ку таранччен мĕнле кăлтăксемпе çитменлĕхсем пулнă — ăна пĕтĕмпех парти çине йăвантарма пăхаççĕ. Çакăнпа килĕшме май çук. Тĕрĕс ĕнтĕ, çĕршыв историйĕнче йĕркесĕрлĕхсем сахал мар пулнă. Анчах çакăншăн парти çеç айăплă мар. Уйрăм руководительсене пула парти авторитечĕ самаях чакрĕ. Çакă пире, коммунистсене, пăшăрхантарать. Çапах та ĕç-пуç лайăхланасса шанатпăр. Çĕнетÿ процесне Коммунистсен партийĕ пуçларĕ-çке.

Пирĕн парторганизацие илсен вара халăх хушшинче ун авторитечĕ çук мар. Авторитет пуласси пĕр хамăртан çеç килет. Рабочисем кашни коммунист обществăра, ĕçре, йăлара хăйне мĕнле тытнине

са илтĕм. Степан Иванович Терентьев, пенсире пулин те, хăйĕн пĕтĕм вăй-халне, пултарулăхне совхоза татах та пуянрах, çирĕпрех тăвас тесе панă, хăй вăхăтĕнче кирек мĕнле ĕçре те ÿркенсе тăман, халăхпа пĕрле йывăрлăхсене çĕнтерсе пынă. Ывăлĕ те унăн, Петр Терентьев, ялти хисеплĕ çын. Вăтам шкултан çеç вĕренсе тухнă. Анчах пĕлĕвĕпе, пултарулăхĕпе институт пĕтернĕ пĕр-пĕр çамрăкран та ирттерет. Юсав мастерскойĕн заведующийĕ вăл. Коммунист хăйне лайăх енчен çеç кăтартса панă. Туслă, пĕр-пĕринчен çирĕп ыйтакан коллектив туса хунă.

Е тата Рудольф Корнишкин, Валерий Терентьев, Николай Исаков трактористсем мĕнрен кая? Коммунист ятĕ вĕсемшĕн ялан ответлăха туйма, çĕнишĕн кĕрешме, халăх хисепне тивĕçлĕ пулма хушакан ят. Иван Петрович Воробьев столяр пирки ял çыннисем ырласа калаçрĕç. Ывăлĕ те ашшĕ пекех ĕçчен, сăпайлă, авторитетлă çамрăк. Николай Воробьева нумаях пулмасть партие илнĕ. Аста шофер, шанчăклă юлташ. Социализмла Ĕç Геройĕн А. М. Зуевăн упăшки Николай Сергеевич хăмлаçă, пăру пăхакан Зоя Петрова, Людмила Жигарева хăмлаçă, вăрман ăсти Иван Чечеков, Юрий Кудряшов строитель, Николай Юркин механик... Ĕçпе чапа тухнă, коллектива хисеплекен, уншăн тăрăшакан, общество ĕçне активлă хутшăнакан, пур енĕпе те ырă тĕслĕх кăтартакан, ял халăхĕ

ХУÇА ТУЙĂМĚ

Вулакансем астăваççĕ пулĕ, иртнĕ çулхи августăн 23-мĕшĕнче пирĕн хаçатра «Забастовка хыççăн» материал пичетленнĕччĕ. Унта Шупашкарти агрегат заводĕнчи хурçă шăратакан цехĕнчи рабочисем забастовка ирттерни çинчен каласа панă. Унтанпа çур çула яхăн иртрĕ. Администраци хăйĕн сăмахне тытать-и? Рабочисен ыйтăвĕсене тивĕçтерчĕ-и? Шел, çак ыйтусем çине ответ кĕтсе илеймерĕмĕр, завод администрацийĕ, редакци хаçат урлă («Кам хăйнă!» 1989, ноябрĕн 1-мĕшĕ) тепĕр хут аса илтерчĕ пулин те, материалсене курмăш пулса ирттерсе ячĕ. Редакцие килекен çырусенче вара вулакансем хурçă шăратакансен паянхи ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллаштарма ыйтаççĕ. Çавна шута илсе, эпир хурçă шăратакан цехри стачка комитетне ертсе пынă Н.З. Курочкин сталевара сăмах парас терĕмĕр.

Республика хаçатĕнче тухса калаçма ирĕк панăшăн пысăк тав. Ку пирĕн тĕллевсене усăмлăрах палăртма, халăха ăнлантарса пама пулăшĕ. Массăллă информаци хатĕрĕсем пирĕн çинчен кĕскен çеç каласа пани питех те сахал, информаци çителĕксĕрри халăхра тĕрлĕ сас-хура суратать. Пире: «Çĕршывра йывăр лару-тăру чухне ĕç укçи ÿстерме требованисем лартни ытла та ăссăрла ĕç, сире укçа кăна кирлĕ», — текенсем пайтах пулчĕç.

Эпĕ цехра вунă çул ĕçлетĕп. Малтан формовщик ĕçне хăнăхрăм, кайран хурçă шăратма тытăнтăм. Вĕри кăмака умĕнче писĕхнисен шухăш-кăмăлне лайăх пĕлсе тăратăп темелле. Халĕ, ав, забастовка хыççăн, мана профком председательне суйларĕç. Сăмах май, стачка комитетĕнче ĕçленĕ В. Кормилицын, С. Чекин, В. Крыжановский, И. Чуплыгин, Ю. Борискевич, Н. Николаев, В. Маховиков тата М. Романов рабочисене те профком членне кĕртрĕç. Эпĕ çак улшăнусене командăпа администраци тытăмне аркатас тĕлĕшпе тунă ситĕнÿсенчен пĕри вырăнне хурса хаклатăп. Халĕ хамăр хуçа, пĕтĕм ĕçе хамăрăн йĕркелесе пымалла.

Паллах, пирĕн тĕп тивĕç — рабочисен интересĕсене хÿтĕлесси. Шел пулин те, администраци забастовка комитечĕн требованийĕсене пурнăçлассишĕн çине тăрса ĕçлени сисĕнмест. Астăватăр пулĕ, ĕç укçине ÿстересси пирĕн тĕп ыйтусен шутĕнчеччĕ. Анчах ку тĕлĕшпе нимĕнле усăмлăх та çук-ха. Ăнланмалла мар пулса тухать. Социализмăн тĕп принципĕ — ĕçленине кура тÿлени, тетпĕр пулсан, пурнăçра çавна мĕншĕн пăхăнмастпăр-ха? Тĕслĕхе пирĕн цеха илĕпĕр. Унăн проектпа пăхнă хăвачĕ — 110 пин тонна хурçă. Ку вăл çулталăк хушшинче çавăн чухлĕ металл шăратмаллине пĕлтерет. Юлашки çулсенче çак хăвата 2,5 хута яхăн ÿстертĕмĕр. Ĕç укçи фончĕ вара кăшт кăна хушăнчĕ. Эппин, продукци калăпăшĕ хăй тĕллĕн ÿсмен, вăл çынсем ырми-канми ĕçленипе пулнă. Çав вăхăтрах пире администраци улталаса пурăннă. Кăна пĕр ÿстермесĕр калатăп. Цех плана тултараймасть тесе, сталеварсене канмалли кунсенче те, смена хыççăн та ĕçлеттеретчĕç. Тĕрĕссипе, пирĕн цех мар, завод плана тултарайман ун чухне. Çакă çынсене тарăхтарман тетĕр-и? Тарăхтарнă,

çине пирĕн пекех е ытларах та илеççĕ. Ку йĕркесĕрлĕхпе килĕшсе пурăнас килмерĕ, çавăнпа кĕрешĕве çĕклентĕмĕр. Çук, ытлашши укçа сăптăрса илме тĕллев лартман эпир, çĕршывра лару-тăру йывăррине те туятпăр. Ĕçшĕн тĕрĕс тÿлеччĕр — çавă канăç памасть цехри рабочисене.

Забастовка хыççăн администрацие килĕшÿ туса хатĕрленĕччĕ. Унта мĕн-мĕн пурнăçламаллине пунктсем тăрăх пайласа тухнă. Ĕç укçи расценкисене çĕнетсе улăштарасси ерипен пулса пырать. Сахал ĕç укçи ÿкекен ытлашши ĕç вырăнĕсене чакарса, укçа кăштах хушса пачĕç-ха. Цехра уйăхри ĕç укçи вăтамран 360—380 тенкĕпе танлашать. Эпир шутланă тăрăх, вăл икĕ хут ытларах пулмалла. Ку ыйтупа отрасльтен комисси те килсе кайнăччĕ. Комисси тунă пĕтĕмлетÿсем пире тивĕçтермерĕç. СССР Верховнăй Совечĕ ячĕпе тата СССР Ĕçлев государство комитетне коллективлă çыру та янăччĕ. Çак ĕç хăш инстанципе пулланса ларчĕ-ши, пирĕн сĕнÿсем камăн сĕтел сунтăхĕнче тусанланса выртаççĕ-ши? Нимĕн те паллă мар. Çавăнпа Ĕçлев государство комитетне хамăрăн кайса килме тивет. Бюрократи чăрмавĕсене хамăр çине тăмасăр сирсе ыватма май килмест пулас.

Рабочи трибуни

Аталанусăр тапхăрти инструкцисем хытах чăрмантарнине тепĕр тĕслĕхпе те çирĕплетме пулать. Эпир хурçă шăрататпăр, эппин çĕршыври металлургсене панă çăмăллăхсемпе усă курма тивĕçлĕ. Анчах машиностроени комплексĕнчи металлургсене ун пек çăмăллăхсем пама палăртман. Сăмахран, вĕсем 160 тенкĕрен кая мар пенси илме (пирĕн 130 тенкĕ) пултараççĕ, отпуск вăхăтне вăрăмлатнă. Стержень участокĕнчи рабочисем хăйсене сывлăхшăн сиенлĕ производствăн пĕрремĕш категорине кĕртме ыйтаççĕ. Çакă вĕсене пенсие вунă çул маларах тухма май парĕччĕ. Ку ыйтăва татса парассине сăлтавсăрах тăсса пыраççĕ. Участокра сиенлĕ япаласем нормăпа пăхнинчен 4—5 хут нумайрах. Тĕпрен илсен, унта хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Оборудованине пăхса-юсаса тăракан слесарьсем валли те çăмăллăх çук. Вĕсем халлĕхе тÿсеççĕ-ха, кайран мĕн патне пырса

халĕ тивĕçлĕ канăва тухакансене пĕр пин тенкĕ пама тытăнтăмăр. Заводра 25 çул ĕçленисем 5 ĕç укçи чухлĕ илеççĕ. Рабочисене апатланмалли 30 пуслăх тÿлевсĕр талонсем паратпăр. Малашне 60 пуслăх тÿлевсĕр талонсем çине куçасшăн. Преми памалли йĕркене çĕнететпĕр.

Сиенлĕ производство пулнă май, çынсен сывлăхне çирĕплетес ыйту питĕ сивĕч тăрать. Ытти çулсенче ку тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсем туса ирттернĕ-ха, анчах мĕн палăртни чылай чухне хут çинче юлнă. Мĕн пытармалли, йывăр условисенче професси чирĕпе чирлесе кайнисенчен хăтăлас шутпа вĕсене ĕçрен кăларса яни те пулнă. Çавăн çинчен уççăн калама хăранă.

Çынсем чирлесси вара хăрушла ÿссе пырать тенĕ пулăттăм. Халех ĕнтĕ чан çапма, васкавлă мерăсем йышăнма вăхăт. Рабочисене пурне те медицина тĕрĕслевĕ витĕр кăлармалла, çак ĕçе пысăк специалистсене хутшăнтармалла. Унсăрăн цехра сывлăх тĕлĕшĕнчен лару-тăру чăннипе мĕнле пулнине тĕпчесе пĕлеймĕпĕр. Кăна та пĕр ÿстермесĕр калатăп, мĕншĕн тесен рабочисен сывлăхĕ мĕнле шайра пулнипе тĕплĕн паллашнă хыççăн СССР халăх депутачĕ, Канаш районĕн тĕп больницин главнăй врачĕ Ф. Г. Григорьев çынсем чирлесси ÿсни пирки хăй питĕ пăшăрханнине палăртрĕ. Унăн пĕтĕмлетĕвĕ никама та савăнтарма пултараймасть. Кунта ыйтма пултараççĕ: «Сирĕн хăвăрăн поликлиника пур, мĕншĕн халăх депутатĕнчен пулăшу ыйтатăр?» Çапла, унти врачсене нимĕн чухлĕ те хурлас килмест, çапах та вĕсем ведомство интересĕсенчен иртейменнине пĕрре мар курнă. Пур енлĕ медицина тĕпчевĕ ирттерме тархасласа ыйтнине кура Горькири регионти медицина институтĕнчен пĕр паллă врач килсе кайни те чуна иккĕленÿллĕ шухăшсем çуратрĕ. Медицина наукисен докторĕ В. Антонюженко пире конкретлă пулăшу парасса кĕтнĕччĕ — кăлăхах. Çавăнпа Фирс Григорьевичран пулăшу ыйтрăмăр.

Стачка комитечĕн членĕсене администраци хĕсмест-и? Чылай чухне çапла ыйтаççĕ. Мĕн калас-ши? Эпир вĕри кăмака умĕнче тăракансен интересĕсене хÿтĕлетпĕр вĕсем — пире. Цех начальникĕпе Ю. Е. Ивановпа тавлашни те, хирĕçни те пулман мар. Кулленхи ĕçре тем те сиксе тухать. Пĕр япалапа тĕрлĕ куçпа пăхса хакланипе сыхăннă ку. Çапах та эпир унпа ыйтусене пĕр чĕлхе тупса, татса пама тăрăшатпăр. Юрий Евдокимович хăй те рабочи йышĕнчен тухнă çын, çынсен хуйхи-суйхине пĕлет. Кирлĕ пулсан, ăна та хÿтĕлеме хатĕр эпир.

Сăмаха пĕтĕмлетсе, çакна калăттăм. Коллективра рабочисен интересĕсене хÿтĕлеме пултаракан, хальхи çĕнетÿ идейисене чунтан парăннă çынсем çуралнă. Вĕсем хуçалăха тытса пырас ĕçе

нашсем парать. Коммунистсен пухăвĕсемпе партком ларăвĕсем мĕнле иртнине тишкерет. Паян, акă, фермăри партгруппа ларăвĕнче пулнă. Хăй те тухса каласнă. Коммунистсене «Волга» совхозри партгруппăсен ĕçĕпе паллаштарнă. Ольга Васильевна Елчĕке хăй те темиçе хутчен пырса кайнă.

Парторганизаци пĕчĕк мар. 113 коммунист унта. Борис Мартьянов шоферпа хăмла ăсти Валентина Манешова — парти членĕсен кандидачĕсем. Валентина [illegible] сулла хăмла пахчине, хĕлле вара кисĕмсуя усăллă çĕвĕ цехĕн заведующийĕнче ĕçлет. Аллă çынна яхăн хĕлле валли ĕç тупнă. Сăмах май каласан, çамрăксене металран сетка тăвас ĕçе те хутшăнтарнă.

Цехри организацисем пиллĕк, партгруппăсем тăххăр. Отчетпа суйлав пухăвĕсем пысăк активлăхпа, дискусси евĕр иртнĕ. Коммунистсем парти авторитетне ӳстерес ыйтусем çинче ытларах чарăнса тăнă, партиллĕ-организациллĕ ĕçпе воспитани ĕçне лайăхлатмалли майсене палăртнă. Партком коммунистсем критиклесе каланисемпе вĕсен сĕнĕвĕсене çийĕнчех пĕтĕмлетнĕ, хăшпĕрисене пурнăçланă. Цехри организацисен секретарĕсемпе партгрупоргсем пулма малтанхисенех хăварнă. Вĕсем темиçе çул хушши ĕнтĕ çак ĕçе анăçлă туса пыраççĕ.

Партком секретарĕн ĕçĕнче мана акă мĕн килĕшрĕ: хуçалăх ыйтăвĕсемпе ĕçлессинчен хăтăлнă вăл, халăхпа ĕçлессине тĕпе хурать. Пухусене, партком ларăвĕсене кунта Уставра палăртнă вăхăтра ирттереççĕ. Кашниех критиклесе каланисемпе сĕнӳсене пĕтĕмлетеççĕ. Йышăннă решенисем мĕнле пурнăçланса пынине тĕрĕслеме контроль карточкисем тунă. Коммунистсен отчечĕсене ячĕшĕн мар, тĕплĕн хатĕрленсе ирттереççĕ. Отчетсене пухусенче çеç мар, партком тата партбюросен ларăвĕсенче те ирттермелле, çак ĕçе май килнĕ таран нумайрах коммуниста хутшăнтармалла — çакăн пек тĕплев тытнă партком.

Нумай пулмасть, акă, тĕп энергетик Ю. Иливанов, А. Петров ветврач, политвĕренӳ кабинечĕн заведующийĕ Т. Иливанова, профком председателĕ А. Калинин отчетсем туса панă. Парторганизацире порученисем пурнăçламан пĕр коммунист та çук. Партком секретарĕ парторганизаци пурнăçне активра ытларах хутшăнтарнипе ĕнтĕ партиллĕ-организациллĕ ĕçпе идеологи ĕçне чылай лайăхлатнă. Политвĕренӳ системинче марксизм-ленинизм шкулĕсем, социализмла хуçалăх шкулĕсем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Совхозри комсомол организацийĕ — районта чи лайăххисенчен пĕри. Коммунистсем сĕннипе çапла йышăннă: коммунистсемпе комсомолецсен пухăвĕсене, тĕпрен илсен, пĕрле ирттермелле. Ку вăл комсомол организацийĕн ĕçне парти енчен ытларах витĕм

варри, Тавай районĕсенчен те фольклор коллективĕсем килнĕ. Асăну кунне масарсенче ирттересси йăлана кĕнĕ. Çĕнĕ йăла-йĕрке хăюллăн пурнăçа кĕрсе пырать. Çамрăксем савăнассăн лару-тăрура мăшăрланаççĕ. Совет Çарне каякансене пĕрле пухăнса ăсатаççĕ, салтакран таврăннă çамрăксен каçне интереслĕ ирттереççĕ. Пысăкрах ялсенче хĕрарăмсен совечĕсем йĕркеленĕ. Вĕсен воспитани ĕçĕнчи пĕлтерĕшĕ пысăк. «Волга» совхозри пек [illegible] культбригадăла таврара урăх çук, терĕç парти райкомĕнче. Музыка шкулĕ ĕçлет. 32 ача вĕренет унта. Вĕренмешĕн çурри совхоз тӳлет. Çул çитмен ачасен клубне уçнă. Тĕрлĕ секци, ĕç вĕрентекен кружок уçма хатĕрлет. Халĕ чăваш литературине ленеççĕ. Çак пĕтĕм ĕçе партком çумĕнче йĕркеленĕ координаци совечĕ туса пырать.

...Каснă-лартнă амăшĕ, терĕç ун пирки ял çыннисем. Чăнах та çапла. Мария Александровна, хăйĕн мăшăрĕпе Корнил Ивановичпа ултă ача пăхса ӳстернĕ. Корнил Иванович, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ, салтакран таврăнсан колхоз председателĕнче, ытти ответлă ĕçсенче пулнăскер, пилĕк çул каялла çĕре кĕнĕ.

Эпĕ партком секретарĕн килĕнче пулса куртăм. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, хур-кăвакал. Сад ĕрчетеççĕ. Пӳртре тирпейлĕ, хăтлă. Çакăнта çуралса ӳснĕ ĕнтĕ Нина Корниловна. Пĕчĕклех ĕçе юратса çитĕннĕ, йывăрлăха тӳсме, çĕнтерме вĕренсе пынă. Елчĕкри вăтам шкула пĕтерсен Аманик фермине ĕçлеме кайнă. Комсомол путевкипе. Икĕ çул çурă хушши ĕнесем суна. Çавăн чухнех теплицăра пахчаçимĕç ӳстернĕ. Çакăнтах ăна хуçалăхри комсомол организацийĕн секретарĕ пулма суйланă. Доярккăра ĕçленĕ чухне Коммунистсен партийĕн ретне кĕнĕ. Çирĕм çул хушши ĕнтĕ партире. Шупашкарти совпартшкул, парти райкомĕн инструкторĕ, партин Горькири аслă шкулĕ, каллех парти райкомĕн инструкторĕ — çакăн пек унăн пурнăç çулĕ. Ялти ĕçчен хĕре коммунистсем асăрханă: тăхăр çул каялла ăна парторганизаци секретарĕн ĕçĕсене шанса панă. Паянхи кунччĕнех вăл çак ответлă та йывăр ĕçре.

Нина Корниловнăпа ăçта кăна çитмерĕмĕр пулĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем, тырпул ăстисем, хăмла ӳстерекенсем, механизаторсем патĕнче пултăмăр, хуçалăхсене, культурăпа сывлăх учрежденийĕсене çитсе куртăмăр. Çакна асăрхарăм: халăх килĕштерет ăна, кĕтет, пĕр пытармасăр чун-чĕререн, уççăн калаçать, канашлать, сĕнӳсем парать, темтепĕр ыйтса пĕлет. «Тӳрĕ кăмăллă та сăпайлă пулнăшăн, хăйне мăнна хуманшăн, пуринпе тенĕ пекех пĕр чĕлхе тупма пĕлнишĕн, çынсене хисепленĕшĕн кăмăллатпăр эпир ăна», — терĕç хăмла пахчинче ĕçлекенсем. Принциплă, çитменлĕхсемпе килĕшсе тăма пултарайман, хăйĕншĕн пачах тăрăшман, коллектив интересĕсене çӳле хуракан, пĕрлешӳллĕ ĕçшĕн хыпса çунакан руководитель вăл — хак пачĕç комплексра ĕçлекенсем.

«Аçтан кăна вăхăтне тупать-ши? Машина-трактор паркне кĕрсе тухман кун çукпа пĕрех унăн. Ĕç кăтартăвĕсем кăна

ĕçлекен кирек хăш çын та ун куçĕ умĕнче, тейĕн. Савăнмасăр, хумханмасăр мĕнле чăтĕ чун: юлашки вăхăтра медицина учрежденийĕсенче ĕçлекенсене те сума сума пуçларĕç. Медицина работникĕсен кунĕнче пире питĕ лайăх чысларĕç. Уява Атăл хĕрринче ирттертĕмĕр. Совхоз директорĕ, партком секретарĕ, профком председателĕ, партком членĕсем пулчĕç. Чи маттуррисене Хисеп грамотисем пачĕç. Ункăнпа сăн ӳкерттертĕмĕр. Килсене чĕрĕ чечек çыххисемпе таврăнтăмăр», — пĕр-пĕрипе тупăшсах аса илчĕç фельдшер пунктĕнче ĕçлекенсем. «Урасăр юлтăм эпĕ. Парти пухăвĕсене çӳрейместĕп. Çапах та парторганизацири лару-тăрăва пĕтĕмпех пĕлсе тăратăп. Коммунистсен пухăвĕ е партком ларăвĕ хыççăн ман пата Нина Корниловна кашнинче тенĕ пекех кĕрсе тухать. Хăй ерçеймесен, партком членĕсем килсе каяççĕ. Мана парторганизацири ĕçсемпе пĕтĕмпех паллаштарса тăраççĕ, эпĕ панă хăшпĕр сĕнӳсене те шута илеççĕ. Хама парторганизацирен уйрăлма паманшăн тав тăвас килет», — хумхануллăн тухрĕç Петр Игнатьевич Белов пенсионер сăмахĕсем.

Тĕпрен илсен, Нина Корниловна пирки ăшшăн, хисеплесе те мухтаса кăна каласа параççĕ.

— Хăвăра кураймансем, тăшмансем çук-и вара сирĕн? — ыйтатăп партком секретарĕнчен.

— Унсăр мĕнле пултăр ĕнтĕ. Йышлă коллективра темле çын та тупăнать. Пĕри, акă, манпа яланах кăмăллăн калаçать, куран-итлен ют çын кусем чăнчăн туссем тесе шухăшлама та пултарĕ. Куç хыçĕнче ку çын вара ман пирки темтепĕр калама хатĕр. Тепĕр чухне ырă мар сăмах та сарать. Тахçан ăна партин енчен çирĕп выговор панăччĕ. Хăйне вăхăтра çăлса хăвартăмăр, пĕтме памарăмăр, тĕрĕс çул çине кăларма тăрăшрăмăр. Тепри пулсан — тав тумалла. Ку ăнлансах çитеймерĕ. Халĕ те партком çине кӳренсе çӳрет. Партком секретарĕн хăшпĕр чухне пуринпе те йăваш та çепĕç пулма май çук-çке. Парти пурнăçĕн нормисене пăснă коммунистсене ответ тыттарма та тивет. Пуринпе те лайăх пулаймастăн. Пирĕн ĕçре çирĕп ыйтмасан — ыррине ан кĕт. Хамăр ĕçре партиллĕ юлташлăха тĕп вырăна хуратпăр.

Партиллĕ юлташлăх вăл — тимлĕх, пĕр-пĕрне ырă сунни, пĕр-пĕрне шанни, пулăшни, тӳрĕлĕх, идейăпа нравственность енчен çирĕп пулни. Çыннăн çак енĕсем пĕр пек мар. Çавăнпа та воспитани ыйтăвĕсене куçран вĕçертмелле мар. Коммунистăн ырă кăмăллă та тимлĕ, тĕрĕс те тӳрĕ çын кăна пулмалла мар. Коммунист ăнланулăхĕ пысăк пултăр, вăл политика тĕлĕшĕнчен писĕхсе çитĕр, суйнипе, тĕрĕс мар каланипе килĕшсе ан тăтăр, коммунизмла нравственность нормисене çирĕп пурнăçласа пытăр. Коммунист хăйне мухтанине ан юраттăр, унăн мăнкă-

урăхла парти йĕркелеме сĕнекенсем те пур. Тепĕр майлă каласан, пирĕн çĕршывра ку таранччен мĕнле кăлтăксемпе çитменлĕхсем пулнă — ăна пĕтĕмпех парти çине йăвантарма пăхаççĕ. Çакăнпа килĕшме май çук. Тĕрĕс ĕнтĕ, çĕршыв историйĕнче йĕркесĕрлĕхсем сахал мар пулнă. Анчах çакăншăн парти çеç айăплă мар. Уйрăм руководительсене пула парти авторитечĕ самаях чакрĕ. Çакă пире, коммунистсене, пăшăрхантарать. Çапах та ĕç-пуç лайăхланасса шанатпăр. Çĕнетӳ процесне Коммунистсен партийĕ пуçларĕ-çке.

Пирĕн парторганизаци илсен вара халăх хушшинче ун авторитечĕ çук мар. Авторитет пуласси пĕр хамăртан çеç килет. Рабочисем кашни коммунист обществăра, ĕçре, йăлара хăйне мĕнле тытнине асăрхасах тăраççĕ. Йăнăш утăмпа утнине тӳрех кураççĕ вĕсем. Çакăн пек коммуниста сивлеççĕ. Çавăнпа та кашни коммунист авторитечĕшĕн тăрăшать совхозри парти комитечĕ. Кашниченех çирĕп ыйтмасăр май килмест — çапла хушать КПСС Уставĕ.

Ыйтатпăр та. Пĕр тĕслĕх çеç илсе кăтартам. Юрий Ивановича Швецова хисеплетĕп эпĕ. Темиçе çул хушши выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен цех коллективне ертсе пырать. Продукци туса илессине ӳстерчĕ. Аратлăха лайăхлатать. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ĕçпе йăла тата кану условийĕсене лайăхлатассине тĕпе хурать. Анчах юлашки вăхăтра тем пулчĕ ăна — тилхепине вăйсăрлатрĕ. Парти комитечĕн ларăвне чĕнме тиврĕ. Юлташла, хытă калаçрăмăр. Учет карточки çине çырса çирĕп выговор патăмăр. Тивĕçлипе. Коммунист ответсăрлăхне курмăш пулса, асăрхамасăр ирттерсе янă пулсан, çынсем пире мĕн калĕччĕç? Çавăнпа кашни коммунистран çирĕп ыйтатпăр эпир. Акă, З. К. Сарукова хăмлаçă парти поручениĕсене пурнăçлама пăрахрĕ, парторганизаци ĕçĕсенче активлăха çухатрĕ. Коммунистсен партийĕн ретĕнчен кăларма тиврĕ ăна.

— Йыш чакасран пĕрте хăрамалла мар, — хăй шухăшне малалла тăсать Нина Корниловна. — Коммунист ятне яракан пĕр çынах пĕтĕм парторганизаци чысне варалама пултарать. Авторитет чакать. Ĕçре ырă тĕслĕх кăтартман, хăйĕншĕн çеç çунакан, коллективра мĕнле те пулин ырă улшăну тăвассишĕн тăрăшман, çĕнетĕве хакламан, çавăн пекех çитменлĕхсене курмăш илтмĕш пулакан, общество пурнăçне хутшăнман, йăлара йĕркесĕр тытакан çын парти ретĕнче пулма тивĕçлĕ мар — çакна асра тытса ĕçлетпĕр эпир.

Тĕрĕс калать партком секретарĕ. Совхозра пулнă чухне çакна эпĕ хам та аванах туй-

Исаков трактористсем мĕнрен кая? Коммунист ячĕ вĕсемшĕн ялан ответлăха туйма, çĕннишĕн кĕрешме, халăх хисепне тивĕçлĕ пулма хушакан ят. Иван Петрович Воробьев столяр пирки ял çыннисем ырласа калаçрĕç. Ывăлĕ те ашшĕ пекех ĕçчен, сăпайлă, авторитетлă çамрăк. Николай Воробьева нумаях пулмасть парти ретне илнĕ. Ăста шофер, шанчăклă юлташ. Социализмла Ĕç Геройĕн А. М. Зуевăн упăшки Николай Сергеевич хăмлаçă, пăру пăхакан Зоя Петрова, Людмила Жигарева хăмлаçă, вăрман ăсти Иван Чечеков, Юрий Кудряшов строитель, Николай Юркин механик... Ĕçпе чапа тухнă, коллектива хисеплекен, уншăн тăрăшакан, общество ĕçне активлă хутшăнакан, пур енĕпе те ырă тĕслĕх кăтартакан, ял халăхĕ умĕнче ята яман коммунистсем совхозра сахал мар.

Совхозăн тĕп участокĕсене коммунистсем ертсе пыраççĕ. Тĕп специалистсенчен, цех начальникĕсенчен, бригадирсенчен чылайăшĕ — парти членĕсем. Хуçалăха пултаруллă руководитель, ăста организатор Петр Геннадьевич Михайлов коммунист ăнăçлă ертсе пырать. Комсомольски чăрашне кунти вырăнсем килĕшнĕ. Институт хыççăн ĕçлеме килнĕ те çакăнта ĕмĕрлĕх шухăшпах пурăнать. Çамрăк специалист ферма заведующийĕнче пулнă, совхозри тĕп зоотехник ĕçĕсене туса пынă, темиçе çул хушши ĕнтĕ — директор, партком членĕ. Хуçалăх экономики вăйланать. Счет çинче халĕ икĕ миллион тенкĕ ытла. Çулталăка ăнăçлă вĕçленĕ. Тырă тухăçĕ кашни гектартан 21 центнера яхăн, кăшман тухăçĕ 500 центнер ытла, çĕрулми те пĕлтĕрхинчен чылай лайăхрах пулнă. Выльăх апачĕ сителĕклĕ хатĕрленĕ. Пĕлтĕр 135 тонна хăмла сутнă. Савăнтаракан кăтартусем. Апла-тăк, парторганизаци ертсе пынипе совхоз çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвать.

КУНТИ парткомăн ĕç стилĕ вăл — конкретлă, ĕçлĕхлĕ пулни, пĕр ĕçе тепринпе тачă çыхăнтарса туса пыни, сăмах парсан — тытма пĕлни, чи усăллă меслетсемпе ĕç хатĕрĕсене суйласа, çынсен шухăш-кăмăлне тĕплĕн тишкерсе шута илме пултарни. Урĕк-сурĕк ĕçленине, чĕрĕ ĕçе сăмах купи айне туннине, пустуй сăмах çаптарнине тӳсме пултараймасть Нина Корниловна, çĕнетĕве, уççăнлăха, демократие малалла аталантарассишĕн пĕтĕм вăй-халне, пĕлĕвне, пултарулăхне парать. Тĕрĕс çулпа утать вăл, коллективпа, активпа тачă çыхăнса ĕçлет. Çавăнпа та ĕç ăнать унăн, çавăнпа халăх хисеплет ăна. Халăх хисепĕ вара — темрен те хаклă. Ахальтен мар ĕнтĕ Иванована 893-мĕш Çĕнĕ Шупашкар округĕ тăрăх РСФСР халăх депутатне суйлама кандидата тăратнă.

А. КРЫСИН.

Н. К. Иванова.

Ю. Дмитриев фотоӳкерчĕкĕ.

тетпĕр пулсан, пурнăçра çавна мĕншĕн пăхăнмастпăр-ха? Тĕслĕхе пирĕн цеха илĕпĕр. Унăн проектпа пăхнă хăвачĕ — 110 пин тонна хурçă. Ку вăл çулталăк хушшинче çавăн чухлĕ металл шăратмаллине пĕлтерет. Юлашки çулсенче çак хăвата 2,5 хута яхăн ӳстертĕмĕр. Ĕç укçи фончĕ вара кăшт кăна хушăнчĕ. Эппин, продукци калăпăшĕ хăй тĕллĕн ӳсмен, вăл çынсем ырми-канми ĕçленипе пулнă. Çав вăхăтрах пире администраци улталаса пурăннă. Кăна пĕр ӳстермесĕр калатăп. Цех плана тултараймасть тесе, сталеварсене канмалли кунсенче те, смена хыççăн та ĕçлеттеретчĕç. Тĕрĕссипе, пирĕн цех мар, завод плана тултарайман ун чухне. Çакă çынсене тарăхтарман тетĕр-и? Тарăхтарнă, çапах хăйсем кăмăлсăррине ытлах палăртман вĕсем.

Мĕн ĕçлесе илнине туллин тӳлеменнине эпĕ аталанусăр тапхăрти чи пысăк тĕрĕсмарлăхсенчен пĕри тесе шутлатăп. Ятарласа шутласа пăхрăмăр: ытти предприятисенче çав йышпах пирĕнтен икĕ-виçĕ хут сахалрах продукци туса кăлараççĕ пулин те, ук-

хурçă шăрататпăр, эппин çĕршыври металлургсене панă çăмăллăхсемпе усă курма тивĕçлĕ. Анчах машиностроени комплексĕнчи металлургсене ун пек çăмăллăхсем пама палăртман. Сăмахран, вĕсем 160 тенкĕрен кая мар пенси илме (пирĕн 130 тенкĕ) пултараççĕ, отпуск вăхăтне вăрăмлатнă. Стержень участокĕнчи рабочисем хăйсене сывлăхшăн сиенлĕ производствăн пĕрремĕш категорине кĕртме ыйтаççĕ. Çакă вĕсене пенсие вунă çул маларах тухма май парĕччĕ. Ку ыйтăва татса парассине сăлтавсăрах тăсса пыраççĕ. Участокра сиенлĕ япаласем нормăпа пăхнинчен 4—5 хут нумайрах. Тĕпрен илсен, унта хĕрарăмсем ĕçлеççĕ. Оборудованипе пăхса-юсаса тăракан слесарьсем валли те çăмăллăх çук. Вĕсем халлĕхе тӳсеççĕ-ха, кайран мĕн патне пырса тухăпăр-ши? Нивушлĕ пирĕн чун ыратмасть?

Паллах, забастовка хыççăн ним те улшăнман тени йăнăш пулĕччĕ. Администраци çынсен кулленхи нушисем çине тимлĕрех пăхни сисĕне пуçларĕ, цехра реконструкци тăваççĕ. Анчах хамăр тăрăшмасăр нимĕн те пулмĕ. Акă,

Стачка комитечĕн членĕсене администраци хĕсмест-и? Чылай чухне çапла ыйтаççĕ. Мĕн калас-ши? Эпир вĕри кăмака умĕнче тăракансен интересĕсене хӳтĕлетпĕр, вĕсем — пире. Цех начальникĕпе Ю. Е. Ивановпа тавлашни те, хирĕçни те пулман мар. Кулленхи ĕçре тем те сиксе тухать. Пĕр япалана тĕрлĕ куçпа пăхса хакланипе çыхăнни ку. Çапах та эпир унпа ыйтусене пĕр чĕлхе тупса, татса пама тăрăшатпăр. Юрий Евдокимович хăй те рабочи йышĕнчен тухнă çын, çынсен хуйхи-суйхине пĕлет. Кирлĕ пулсан, ăна та хӳтĕлеме хатĕр эпир.

Сăмаха пĕтĕмлетсе, çакна калаттăм. Коллективра рабочисен интересĕсене хӳтĕлеме пултаракан, хальхи çĕнетӳ идейисене чунтан парăннă çынсем çуралнин, вĕсем хуçалăха тытса пырас ĕçе хăйсем çине илни — ку хăех ĕнтĕ паянхи ырă пулăм. Эпир хамăр çултан пăрăнма шутламастпăр.

Н. КУРОЧКИН,
Шупашкарти агрегат заводĕнчи хурçă шăратакан цехри сталевар, профком председателĕ.

ХАЛĔ ТЕ КУÇ УМĔНЧЕ

Пĕр вăхăтра хальхи Вăрнар районĕнчи Кив Сăрьел, Туçи Çармăс, Уйкас Кипек тата Енĕш ял Совечĕсене кĕрекен ялсене Шăхасан районне уйăрса ячĕç. 1935 — 56 çулсенче Шăхасанта, «Вăйлă тырпулшăн» хаçат тухса тăратчĕ. Кив Сăрьелĕнче çуралса ӳснĕ Гаврил Никифоровпа эпĕ унта тăтăшах çырса тăраттăмăр. Вăл та, ман пекех, хăйĕн ашшĕне астăвайман. Ĕлĕкхи патша вăрçинче пуçне хунă пулнă. Сухви ятлă аппăшĕпе иккĕшĕ — сурма тăлăх ачасем — ялти Хветĕр пиччĕшĕ килĕнче амăшĕпе пĕрле выçăлла-тутăллă ӳскеленĕ. Гаврил, ялти шкултан вĕренсе тухсан, Шупашкарти партипе совет шкулне вĕренме кĕчĕ, ăна ăнăçлă пĕтерчĕ. Тăван яла ĕçлеме килчĕ. Вулав çуртĕн заведующине лартрĕç. Вăл вăхăтра Гаврилăн тавракурăмĕ самаях аталаннăччĕ ĕнтĕ. Политика ыйтăвĕсене ун пек ăнлантаракан та пулман. Ял Советĕнче те, колхоз правленийĕнче те сахал вĕреннĕ çынсем ĕçлетчĕç.

Гаврил Никифоров çав çынсемпе ырми-канми ĕçлерĕ. Ушкăнпа пухăнса, вăл каласа панине итлетчĕç, çĕнĕ хыпарсене ял çыннисене вăхăтра пĕлтерсе тăратчĕ. Пĕчĕкрех концертсем лартма, спектакльсем вылямa çамрăксене хутшăнтаратчĕ. Район хаçатне çырнипе пĕрлех, ялта стена хаçачĕ кăларма тытăнчĕ. Тĕрĕсмарлăхсене тăрă шыв çине кăларакан критикăллă статьясем час-часах çырнă. Ялти пуçлăхсене питлеме те шикленсе тăман вăл. Ку вара хăшпĕрисене кăмăла каймастчĕ.

Пурăна киле вĕсем Гаврила тасалма тĕллев тытнă. Шыракан — тупать, шаккакана — уçаççĕ, теççĕ халăхра. Пĕр кунхине Гаврила хирĕçлисем вулав çуртĕнче çакăнса тăракан И. Сталин портречĕн куçне çунакан пируспа тĕксе шăтараççĕ. Малтанах хатĕрлесе хунă «свидетельсене» васкавлăн чĕнсе илсе акт çыраççĕ. «Еплерех тискер ĕç тупнă! Халăхсен çулпуçне,

Астăвăм

çĕр çинчи турă куçне çунтарнă!» — кăшкăрашнă вĕсем. Çапла вара, киле апат çиме кайса киличчен Гаврил «халăх тăшманĕ» пулса тăчĕ. Ăна эпĕ урăх кураймарăм. Тĕрмере вилнĕ вăл.

1935 çулта пирĕн ялти колхозниксен пухăвĕ колхоза Чăваш АССР Совнарком председателĕ В. И. Токсин ятне пама йышăнчĕ. Вăл пирĕн яла час-часах килсе çӳретчĕ. Эпĕ 1931 çултанпа ялти комсомол организацийĕн секретарĕ пулнă май, В. И. Токсин колхоза килсен, активпа тĕлпулусем ирттернĕ вăхăтра яланах пĕрле пулнă. Кирлĕ канашсем парса хăваратчĕ вăл. Пысăк специалистсене лекцисем вулаттаратчĕ. Пирĕн колхоз вăл çулсенче самаях çирĕп хуçалăхчĕ. Виçĕ бригада пулнă. Кашни бригадăрах тырă вырса, кĕлте çыхса пĕрер тĕмĕн хурса хăваракан машинăсем, ытти тĕрлĕ техника пурччĕ. Çав çулсенче икĕ вите çĕнĕрен тунă. Пĕр кĕркунне В. И. Токсина чăваш тĕррисемпе эрешленĕ шурă кĕпе тăхăнтартрĕç. Ялсем илемленчĕç. Кашни районтах акатуй ирттерме тытăнчĕç. Республикăна Ленин орденĕ пачĕç. Халăх пурнăçĕ лайăхланчĕ. **Колхоз ĕçкунĕ пуçне 6,4 килограмм тырă валеçрĕ. Икĕ çул бригадирта ĕçленĕ хыççăн Совет Çарне тухса кайрăм. В. И. Токсина урăх кураймарăм, вăл та элек çерепине лекнĕ.**

Тепĕр çынна та манаймастăп. Ун чухне Вăрнарти МТС çумĕнче политпай пурччĕ. 1934 çулта Кĕçĕн Кипекре комсомол организацийĕсен секретарĕсен семинар-вĕренĕвне ирттерчĕç. Ăна политпайăн комсомол енĕпе ĕçлекен начальникĕ Никифоров ертсе пычĕ. Аслă çыннччĕ. Вăл каланине сывламасăр тенĕ пек итлесе лараттăмăр. Кайрах ăна республикăри комсомол обкомне илсе кайрĕç. Вăл та Сталин серепине лекнĕ, терĕç.

Шăхасан райĕçтăвкомĕн председателĕнче Евдокия Дмитриевна Ваперкке ĕçлерĕ. Ăшă кăмăллă, лăпкă чунлă, типтерлĕ хĕрарăмччĕ вăл. Чăвашла лайăх калаçатчĕ. Сăмах май каласан, хăйĕн мăшăрĕпе пĕрле «Чăваш шкулĕсенче вĕрентмелли учебник» кăларнăччĕ вĕсем. 1936 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче Çĕнĕ Конституци йышăнчĕç. Советсен VIII съездне Е. Д. Ваперкке делегат пулса хутшăнчĕ. Мускавран таврăнсан, ялсенчи актива пухса, тĕлпулу ирттерчĕ.

Евдокия Дмитриевна шутлама та пултарайман пулĕ хăйне тепĕр вунă уйăхранах партирен кăларса пăрахасса, вуннилĕк çула тĕрмене хупасса. Урăх эпĕ ăна нихçан та курман.

Халĕ маларах асăннă çынсен таса ячĕсене тавăрнă. Вĕсен ячĕпе асăну палăкĕ кирлех.

И. СИРОТКИН,
ĕçпе вăрçă ветеранĕ
Вăрнар районĕ,
Çĕнĕ Сăрьел ялĕ.

Çĕнĕ кĕнеке

Экономикăна вĕренекенсене пулăшма

Çĕршывра хальхи вăхăтра экономика реформи пырать. Ăна ăнăçла пурнăçласси экономикăна кашни çын мĕнле **пĕлнинчен нумай килет. Çавна май пурне те экономикăна вĕ**рентме тытăннă. Пропагандистсене, шкулсемпе семинарсенче тата хăйсем тĕллĕн вĕренекенсене пулăшма Мускаври Политика литературин издательстви **«Краткий экономический словарь»** ятлă справочник пичетлесе кăларчĕ. Çĕнетӳпе çыхăннă нумай-нумай çĕнĕ экономика ăнланăвĕсене кĕртнĕ унта. Калăпăр, пирĕн çĕршывра халĕ çеç йĕркеленме тытăннă акционер обществипе агропромышленность банкĕ мĕн вăл? Çакăн пек терминсемпе ăнланусем словарьте питĕ нумай. Хуçалăх механизмне çĕнетсе лайăхлатассипе, ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхне ӳстерессипе çыхăннă экономика ăнланăвĕсене пурне те ăнланмалла уçса панă. Планлас ĕçе çĕнетсе лайăхлатас, тулли хуçалăх расчетне ĕçе кĕртес, бригада тата çемье подрядне йĕркелес ыйтусемпе çыхăннă экономика ăнланăвĕсене те илсе кăтартнă. Предприятисемпе хуçалăхсене хăйтĕллĕнлĕхпе хăйтӳлевлĕх йĕркипе ĕçлеме мĕн кирлĕ? Экономикăна мĕнле демократизацилемелле? Çак ыйтусене уçса паракан статьясем те пур словарьте.

КГБ: ЫЙТУСЕМПЕ ОТВЕТСЕМ

«Коммунизм ялавĕ» Чăваш АССР Государство хăрушсăрлăх комитечĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарма пуçларĕ. Пĕлтĕрхи сентябрĕн 10, 12-мĕшĕсенче «Вăрттăн вилтăприсем» тата «Уççăнлăх кирлĕ...» материалсем пичетленчĕç. Вĕсенче халиччен халăха пĕлтерме юраман темăсене хускатнă. Уççăнлăх чекистсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пама пысăк майсем туса пачĕ. Комитета тата хаçат редакцине çырусем нумай килеççĕ. Хăшпĕрисем çине хаçатăн паянхи номерĕнче Чăваш АССР Государство хăрушсăрлăх комитечĕн председателĕн заместителĕ Н. А. Николаев хуравлать.

УÇÇĂНЛĂХ ТĔКĔРĔ

Шупашкарти Андреевпа Петрова КГБара ĕçлеме кадрсем суйласа илес тата вĕсене унта çирĕплетес ĕçе мĕнле туса пыни интереслентерет. «КГБ сотрудникĕ кам пулма пултарать? Унта ахаль рабочие тата КПСС членĕсене кăна йышăнаççĕ-и? Сотрудниксене ăçта вĕрентеççĕ?» — ыйтаççĕ вĕсем.

Чăваш АССР Государство хăрушсăрлăх комитетне ĕçлеме производствăра хăйсене пур енчен те лайăх енчен кăтартнă работниксене суйласа илеççĕ. Пурин те КПСС членĕ пулмалла. Вĕсене питĕ тĕплĕ тĕрĕслеççĕ. Требованисем мĕнлерех-ха? Чи малтанах, кандидатсен граждански ответлăха хытă туймалла, обществăна çĕнетсе лайăхлатас ĕçе активлă хутшăнмалла, халăха тата Тăван çĕршыва парăнса ĕçлемелле, çар службин йывăрлăхĕ умĕнче нихăçан та пуç усмалла мар, кулленхи пурнăçра хастар пулмалла. Комитета аслă пĕлӳ илнисене, çар службинче пулнисене çеç илеççĕ. Ĕçре тата политика тĕлĕшĕнчен пиçĕхнĕ, пурнăçра пуян опыт пухнă, пĕтĕм çĕршыв, республика историйĕпе культурине пĕлекен, пысăк тавракурăмлă, çĕршыв пурнăçĕпе хытă интересленекен çынсене унта вырнаçма чылай çăмăлрах. Сывлăхĕ те çирĕп пулмалла. 27—28 çулсенчен аслă маррисене илеççĕ.

Службăна, ССР Союзĕн Законĕн çар тивĕçĕ çинчен калакан 66 тата 104-мĕш статйисемпе килĕшӳллĕн, прĕклĕ йĕркепе илеççĕ. Ĕçе илнисене Чăваш АССР Государство хăрушсăрлăх комитечĕ ССР Союзĕн Государство хăрушсăрлăх комитечĕн вĕренӳ заведенийĕсене ярать. Кунсăр пуçне, вăтам пĕлӳ илнĕ 2—3 çын çулсерен ССР Союзĕн Государство хăрушсăрлăх комитечĕн аслă шкулне вĕренме каять.

Чăваш АССР Государство хăрушсăрлăх комитетĕнче кадрсене вĕсен политикăпа ĕç пахалăхне тата служба характеристикине шута илсе çирĕплетеççĕ.

Калас пулать, комитетра ĕçлекенсен йышне пысăк теме çук. Кадрсем нумаях кирлĕ мар пире. Комитета çĕнĕрен илесси, тĕпрен илсен, вĕсене ĕçрен кăларассипе тата командировкăна ярассипе çыхăннă. Сăмах май, пирĕн офицерсене службăна çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене яма пултараççĕ. Сăмахран, хăшпĕрисем службăра ют çĕршывсенче те пулнă. Тăваттăн Демократиллĕ Афганистан Республикинче интернационалла тивĕçе пурнăçланă.

Елчĕк районĕнче пурăнакан Павлова çак ыйтусем интереслентереççĕ: республикăра КГБ мĕн тума кирлĕ? Унта миçен ĕçлеççĕ? МВДпа КГБна ĕçлеме мĕншĕн вырăссене çеç илеççĕ, наци кадрĕсене çирĕплетмеççĕ?

Хăрушсăрлăх комитечĕ Тăван çĕршыва сутма пултаракансене тата сутăкансене, террорла акци, диверси тăвакансене, обществăна сиен кӳрекенсене, контрабандăна хутшăнакансене, шпионсене, валютăпа усă курмалли правилăсене пăсакансене, государствăпа общество стройне вăйсăрлатас тĕлĕшпе ытти преступленисем тăвакансене тупса палăртать. Совет влаçĕн интересĕсене хӳтĕлет, организациленĕ преступноçа хирĕç кĕрешет, республикăри хăшпĕр предприятисемпе организацисенче государство вăрттăнлăхне шута илсе ĕçленине тĕрĕслесе тăрать, вĕсенче ятарлă çыхăну йĕркелет.

Государствăна хирĕçле преступленисем тăвакансем çĕршыва нумай сиен кӳреççĕ. Комитетчиксен вĕсене тупса палăртмалла, преступлени тума хатĕрленекенсене тытса чармалла. Республикăри чекистсем вĕсене тĕрĕс çул çине тăратас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлеççĕ.

Халлĕхе республикăри КГБра миçе сотрудник ĕçленине пĕлтерме пултараймастпăр. Кун пирки уççăн калас пулсан, çĕршывăн аслă органĕн ятарлă решенийĕ кирлĕ. СССР Халăх депутачĕсен съезчĕ тата ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕ ССР Союзĕн Государство хăрушсăрлăх комитечĕн бюджечĕпе халăха паллаштарма йышăнсан, республикăри КГБра ĕçлекенсен йышне те пĕлтерĕпĕр.

Чăн та, кунта хăшпĕр япаласем пирки халех калама пулать. Комитетăн Канашри уйрăмĕнче, акă, начальник тата пилĕк офицер шутланса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен тивĕçне республикăн кăнтăр енчи ултă районĕнче, Канашра тата чугун çул çинче пурнăçлаççĕ. Республикипе сотрудниксем кашни район пуçне пĕр çын та лекмеççĕ. Сахал-и е нумай-и ку? Пирĕн шутпа, государство тата ĕççыннисен интересĕсене хӳтĕлес тесен, кунтан сахалрах пулмалла мар.

Республикăри комитетра çурри ытла — чăвашсем. Вĕсене ĕçлеме чылай çăмăлрах. Мĕншĕн тесен ял çыннисемпе вĕсем чăвашла калаçма пултараççĕ. Ертсе пыраканĕсем хушшинче чăвашсемпе вырăссен йышĕ пĕр пекех.

Комитетра чăваш чĕлхин курсĕсене йĕркеленĕ. Унта вырăссем чăвашла çырма, вулама, калаçма вĕренеççĕ.

Çакна пĕлтерме пултаратăп: чăвашсем çĕршыври Государство хăрушсăрлăх комитечĕсенче чылайăн ĕçлеççĕ, ертсе пыракан вырăнсенче те пур.

Шупашкарта пурăнакан Петрова çапла ыйтать: юлашки вăхăтра тĕнчери лару-тăру самаях лайăхланчĕ. Çав вăхăтрах КГБ аппарачĕ ӳссе пырать. Çакна мĕнле ăнланмалла?

Çапла, тĕнчери лару-тăру лайăхланма пуçларĕ. Ку ССР Союзĕ тĕнчери çĕршывсен хутшăнăвĕсене йĕркелес, ядерлă хĕçпăшала пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçленинчен нумай килет. Çав вăхăтрах нихăш капитализм çĕршывĕнче те спецслужбăсен йышне чакармаççĕ. Вĕсен бюджечĕ ӳссе пырать. Çакна курмасăр тата шута илмесĕр тăма çук. Çак условисенче çĕршыв КГБ работникĕсен йышне хăвăрт чакарма пултараймасть. Апла пулин те, ССР Союзĕн Государство хăрушсăрлăх комитечĕн председателĕ пĕтĕм халăха комитетсенче ĕçлекенсен йышне чакарни çинчен пĕлтерчĕ. Çакна ССР Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене чакарнипе тата КГБăн пиллĕкмĕш управленине пĕтернипе çыхăнтармалла. Паллă ĕнтĕ, çар чаçĕсемпе пĕрлех КГБăн контрразведка тăвакан уйрăм пайĕсене сахаллатнă.

Республикăри чекистсен йышĕ юлашки 5—6 çулта пачах ӳсмен. Кунтан та ытларах, хăшпĕр штатсене пĕтернĕ.

Шупашкарти Ильина çапла ыйтать: республикăри Государство хăрушсăрлăх комитечĕн КГБ историйĕн музейĕ пур-и? Çук пулсан, хăçан тăваççĕ? Унта пурте лекме пултараççĕ-и?

Комитетра Чекист пӳлĕмĕ пур. Ăна хамăр сотрудниксем обществăлла йĕркепе тунă. Унта КГБ органĕсен историйĕпе паллашма пулать.

Чекистсен пӳлĕмне пырса курас тесен, малтан пирĕнпе калаçса татăлмалла. 15—20 çынран ытла мар тăракан ушкăнсене шăматкунсенче йышăнатпăр. Заявкăсене 22-15-00 номерлĕ телефонпа дежурнăй офицер йышăнать. Комитета килсе пама та пултаратăр.

Тен, унта лекесси халлĕхе чăрмавлăрах та-и. Мĕншĕн тесен Чекист пӳлĕмĕ сотрудниксем ĕçлекен çуртра вырнаçнă. Унта вара ĕç кунĕсенче пурне те кĕртмеççĕ. Çурта реконструкци тума пуçласан, Чекист пӳлĕмне пысăклатасшăн. Малашне экспозицисем ытларах пулĕç. Çынсене чăрмавсăр-мĕнсĕр кĕрсе курма условисем туса парăпăр.

Хальхи вăхăтра архивра краеведени музейĕ валли КПСС обкомĕн партархивĕпе пĕрле КГБ ĕçне-хĕлне çутатакан материалсенчен экспозици хатĕрлеççĕ.

Чекист ĕçĕ çăмăл мар, çав вăхăтрах хисеплĕ те. Республикăри ĕç коллективĕсенче çакна лайăх ăнланаççĕ. Пире нумай пулăшаççĕ. Хăйсен чи лайăх работникĕсене пирĕн пата ĕçлеме направленипе яраççĕ. Пирĕн работниксенчен чылайăшĕ Чăваш государство университетĕнчен, Чăваш педагогика тата ялхуçалăх институчĕсенчен вĕренсе тухнă. Вĕсен тата «Шупашкарти промышленность тракторĕсен завочĕ», «Шупашкарти электроаппаратура завочĕ», «Электроприбор» производство пĕрлешĕвĕсен, приборсем тăвакан завод коллективĕсем унчен хăйсем патĕнче ĕçленĕ, хальхи вăхăтра пирĕн патра штатра тăракан сотрудниксемпе чăннипех те мухтанма пултараççĕ. Вĕсем чекист ятне çӳлте тытаççĕ. Комитетпа ĕç коллективĕсем хушшинчи çыхăнусене çирĕплетсе пыратпăр.

Ветерансем çинчен

Пархатарлă кунçул

нометчика III степень Мухтав орденĕпе наградăланă. Берлина çитме 50 километр юлсан, ăна каллех амантнă.

Çар службине Петр Никифорович 1947 çулта вĕçленĕ. Малтан Патăрьелĕнчи çыхăну кантурĕнче ĕçленĕ. Канашра механизатора вĕреннĕ. Ултă çул хушши комбайнер пулнă. Çав вăхăтра техникăна лайăх пĕлсе çитнĕ. Çакна шута илсе-тĕр, ăна МТСри склад заведующийĕ пулма çирĕплетнĕ.

П. Кипзов, ялхуçалăхне техникăпа тивĕçтерес тĕлĕшпе вăтăр çул ытла ĕçлесе, ырă ят çĕнсе илнĕ. Вăл тӳрĕ кăмăлпа ĕçленине, наставник пулнине нумай награда çирĕплетет. 1976 çулта Петр Никифорович «Хисеп Палли» орден илме тивĕçлĕ пулнă.

Мăшăрĕпе — Еленăпа Яковлевнăпа — икĕ хĕрпе ывăл çитĕнтернĕ. Иккĕшĕ производствăра вăй хураççĕ, кĕçĕнни Совет Çарĕнче хăйĕн службине тивĕçпе тӳрĕ кăмăлпа пурнăç-

---

Вулаканпа калаçатпăр

КАЯЛЛА ТАВĂРСА ПАНĂ

Ф. Г. ГЕРАСИМОВА,
пенсионера
(Алкеш поселокĕ)

Эсир Алькешра пропискăра тăратăр, хальхи вăхăтра Хусанти чугун çул çинче ĕçлетĕр. Пенсие тухни 3-мĕш çул пулин те, Сире 1989 çулшăн ялхуçалăх налогĕ (29 тенкĕ) тӳлеттернĕ. Çакăнпа килĕшмесĕр, Эсир Калинин райĕçтăвкомĕн финанс пайне кайнă — унта ыйтăва тивĕçтермен, тетĕр.

Сирĕн çыру çине Чăваш АССР финанс министрĕн заместителĕ

УРĂХ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Съезд уçалнă

СОФИЯ, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Столицăри Халăхăн культура двореçĕнче Болгарири коммунистсен партийĕн XIV съезчĕ ĕçлеме пуçланă. Çак съезд — парти историйĕнчи черетсĕр пĕрремĕш съезд. Съезда хутшăнма 980 пин коммунистран 2.752 делегат суйланă.

Съезд кун йĕркинче — Болгарири демократиллĕ социализм манифесчĕн тата партин çĕнĕ уставĕн проекчĕсене, БКП Центральнăй Комитечĕн политикăллă докладне сӳтсе явасси, партин ертсе пыракан çĕнĕ органĕсене суйласси.

Делегатсен шухăш-кăмăлĕ мĕнле пулни съезд пуçлансан пирвайхи минутсенчех палăрнă. Процедура ыйтăвĕсене пăхса тухма пĕр сехет вăхăт иртнĕ. Делегатсем съездăн ертсе пыракан органĕсене суйлама чи активлă хутшăннă.

Центральнăй Комитетăн «Партие çĕнетесси тата Болгарире демократиллĕ социализм обществи туса хурасси» çинчен калакан докладне БКП Центральнăй Комитечĕн Генеральнăй секретарĕ Петр Младенов тунă.

Парти черетсĕр XIV съездне эпир чрезвычайлă лару-тăрура чрезвычайлă сăлтавсене пула ирттеретпĕр, тенĕ вăл. Хальхи вăхăтра Болгари экономика, политика тата мораль енĕпе йывăр кризис тӳсет. Çакнашкал лару-тăру нумай вăхăта пыма пултараймасть. Вăл халăхшăн та, çĕршывшăн та, партишĕн те пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратма пултарать.

БКП халĕ вăйсăрланса çитнĕ. Çак сăмахсенче ӳстерсе калани пачах çук. Пирĕн событисене тĕрĕс хакламалла. Демократиллĕ Германи Республикинче, Чехословакире, Венгрире, Польшăра, Румынире мĕн пулса иртнине шута илсе ăса вĕренмелле. Болгаришĕн Совет Союзĕнчи çĕнетӳ опычĕ уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пирĕн çав çĕнетӳвĕн лайăх енĕсене те, унти йывăрлăхсене те тĕплĕн шута илмелле, тенĕ П. Младенов.

• • •

СОФИЯ, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарири коммунистсен партийĕн кунта иртекен XIV черетсĕр съездĕнче БКП Центральнăй Комитечĕн политика докладĕ тăрăх çивĕч дискусси пуçланнă.

Доклада партин Генеральнăй секретарĕ Петр Младенов туса панă. Делегатсем кашни коммуниста, çĕршывăн кашни гражданинне чĕререн хумхантаракан ыйтусем çинчен уççăн тата хĕрӳллĕн калаççĕ.

Докладра, çавăн пекех съездăн политика декларацийĕн тата БКП çĕнĕ уставĕн съездра сӳтсе явма тăратнă проекчĕсенче партин шалти пурнăçĕн, унăн политикин тĕрлĕ ыйтăвне çĕнĕлле хускатнă. Çак темăсене ораторсем анлăн сӳтсе яваççĕ. Делегатсен сăмахĕсенче ытларах БКП Болгарие ку чухнехи демократиллĕ право государстви туса хурас, партие хăйне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе палăртнă çул-йĕре тăтăклăн ырлани çинчен калаççĕ.

Политикăллă пурнăç улшăнать

ПРАГА. (ТАСС). Чехословакин политикăлла тата обществăлла пурнăçĕнче кашни кунах мĕнле те пулсан улшăну пулать. Урамсен, площадьсен, метро станцийĕсен ячĕсем улшăнаççĕ. Сăмахран, Чехословаки столицинчи Ленин ячĕпе хисепленекен метро станцине Дейвицки станци, Октябрьти Социализмлă Аслă революци площадьне Çĕнтерӳ площачĕ ятне пама сĕнеççĕ. Киров тата Жданов урамĕсен, Клемент Готвальд тата Майăн пĕрремĕшĕ ячĕпе хисепленекен урамсен ячĕсене улăштарма палăртнă.

Готвальд памятникĕсене пур çĕртен те илеççĕ. Оломоуц хулинче Ленинпа Сталинăн Октябрьти Социализмлă Аслă революци площадĕнчи 11 метр çӳллĕш скульптурăллă композицине пăснă та вырăнти музей запасникне ăсатнă. Площаде 1969 çулта хăйне-хăй çунтарса янă Палах студент ятне панă.

Массăллă информаци органĕсем тĕлĕшпе те лару-тăру улшăннă. Çĕнĕрен 25 тĕрлĕ хаçат-журнал тухма пуçланă. Çĕнĕрен çуралнă «никама пăхăнманнисем» иртнĕ вăхăтри хаçатсемпе журналсен традицийĕсене вăя кĕртесшĕн. Чехословакири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ кăларса тăнă пилĕк журнала кăларма пăрахнă. Пичет çинчен калакан çĕнĕ закон хатĕрлеççĕ.

Килĕштерсе ĕçлеме хатĕр

ВАРШАВА, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Польша президенчĕ Войцех Ярузельский Польша Республикин Социал-демократийĕн Тĕп совечĕн председательне Александр Квасьневские тата çак партин (СДРП) Ĕç тăвакан тĕп комитечĕн генеральнăй секретарьне Лешек Миллера йышăннă.

Çĕнĕ политика пĕрлешĕвĕн руководителĕсем президента учредительнăй конгресс мĕнле иртни тата унăн результачĕсем çинчен каласа панă, çавăн пекех СДРП тĕрлĕшухăшлăха, социаллă тĕрĕслĕх принципĕсене тĕпе хуракан демократиллĕ сулахайри вăйсен анлă юхăмĕ пулса тăма, Польша государствине аталантарма тата Европăра унăн позицийĕсене çирĕплетме пулăшакан тарăн улшăнусем туса ирттерме тăрăшни çинчен пĕлтернĕ.

Социал-демократи сулахайри вăйсемпе социаллă прогресшăн кĕрешекен организацисем хушшинче хăйĕн союзникĕсене шырама пуçлать. Çавăн пекех вăл конституципе килĕшӳллĕн демократие аталантарма, Польшăна йывăрлăхран илсе тухма, çавăн пекех унăн экономикине çирĕплетме пулăшакан тарăн реформăсем пурнăçа кĕртме тĕллев тытнă ытти вăйсемпе килĕштерсе ĕçлеме хатĕр.

Студентсем шанмаççĕ

ТОКИО, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Япони студенчĕсем çĕршыври политика деятелĕсене шанманнине палăртаççĕ.

Токиори Васэда университетĕнче вĕренекен çĕр студентран саккăрăшĕ çеç «вăйлă çынсене» хисепленине кăтартса панă. Асăннă университетран хăй вăхăтĕнче çĕршывăн хальхи премьер-министрĕ Тосики Кайфу вĕренсе тухнă. Çĕршыври паллă «Майнити» хаçат суйлав умĕн ирттернĕ тĕпчевсен результачĕсем ыйтса пĕлнĕ студентсенчен 70 проценчĕ Япони парламенчĕн представительсен палатин февралĕн 18-мĕшĕнче ирттерме палăртнă суйлавне хутшăнма шутламине кăтартса параççĕ.

Вĕренекенсенчен ытларахăшĕ шутланă тăрăх, укçа-тенкĕ политикăра мĕнпур ыйтăва татса парать, çак формулăпа малашне те усă курма тивет. Енчен те çак «услам» пуйма пулăшмасть пулсан, пĕр çын та политикăра ĕçлемен пулĕччĕ, — шутлаççĕ студентсем. Вĕсем влаçра тăракан либерал-демократсен партийĕ обществăн политика системине тĕпрен çĕнетсе улăштарасса ĕненмеççĕ. Ыйтса пĕлнĕ студентсенчен пĕрре виççĕмĕш пайĕнчен сахалтарах ушкăнĕ консерваторсем майлă пулни çинчен каланă.

Хонеккера

Вице-президент пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК. (ТАСС). США вице-президенчĕ Д. Куэйл [illegible] телекомпания пред-

пирĕн вĕрентме кирлĕ мар. Эпир мирлĕ протестсенчен аякки тăратпăр, эпир хăйсен

…кан 66 тата 104-мĕш статйи-

…летмессĕ?

кашни район пуçне пĕр çын та

хашпĕр штатсене петерне.

Ветерансем çинчен

Пархатарлă кунçул



Кавказа ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче хăюлăх кăтартнăшăн П. Н. Князева «Паттăрлăхшăн» медальпе наградăланă. Кунтах йывăр аманнă. Сывалсан, Крымра çапăçнă. Каллех «Паттăрлăхшăн» медаль илме тивĕçлĕ пулнă. 1945 çула Польшăра кĕтсе илнĕ. Нимĕç фашисчĕсене Висла юханшывĕ хĕрринче çапса аркатнă çĕре хутшăннă. Бранденбург провинцийĕнче пынă çапăçусенче палăрнăшăн П. Князев минометчика III степень Мухтав орденĕпе наградăланă. Берлина çитме 50 километр юлсан, ăна каллех амантнă.

Çар службине Петр Никифорович 1947 çулта вĕçленĕ. Малтан Патăрьелĕнчи сыхăну кантурĕнче ĕçленĕ. Канашра механизатора вĕреннĕ. Ултă çул хушши комбайнер пулнă. Çав вăхăтра техникăна лайăх пĕлсе çитнĕ. Çакна шута илсе-тĕр, ăна МТСри склад заведующийĕ пулма çирĕплетнĕ.

П. Князев, ялхуçалăхне техникăпа тивĕçтерес тĕлĕшпе вăтăр çул ытла ĕçлесе, ырă ят çĕнсе илнĕ. Вăл тÿрĕ кăмăлпа ĕçленине, наставник пулнине нумай награда çирĕплетет. 1976 çулта Петр Никифорович «Хисеп Палли» орден илме тивĕçлĕ пулнă.

Мăшăрĕпе — Елена Яковлевнăпа — икĕ хĕрпе ывăл çитĕнтернĕ. Иккĕшĕ производствăра вăй хураççĕ, кĕçĕнни Совет Çарĕнче хăйĕн служба тивĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлать.

Я. СОРОКИН.
Патăрьел районĕ.

Ÿкерчĕк çинче: П. Н. Князев.

ЫРĂ ЙĔР

Вăрнар районĕнчи Турçи Çармăсри сад ăсти А. И. Савельев 90 çулта ĕнтĕ. Пурпĕр хăйне вăр-вар тыткалать. Арăмĕ унăн 15 çул каялла çĕре кĕнĕ, халĕ Александр Игнатьевич пĕччен пурăнать.

Каччă чухне вăл Деникин, Юденич, Махно çарĕсене хирĕç çапăçнă. Тăван яла таврăнсан, сад пахчи ĕрчетнĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансанах фронта тухса кайнă. Икĕ хутчен аманнă. Килне таврăнсан, хурт-хăмăр ĕрчетнĕ. Çак ĕçре паянхи кунччĕнех тăрăшать. 20 вĕлле тытать. «Этеме пыл кирлĕ. Ăна çинипе паянхи кунччĕнех хама аван туятăп. Ĕçлес килет», — каласа парать мучи. Вăл лартнă иккĕр ытла йывăç яла илем кÿрет.

Х. ГОРДЕЕВ,
вăрçă тата ĕç ветеранĕ.
Канаш районĕ.

ХĔРАРĂМСЕМ ВАЛЛИ — ÇĔНĔ ЖУРНАЛ

Нумаях пулмасть Мускавра çыравçă-хĕрарăмсен федерацийĕн учредительнăй конференцийĕ пулса иртнĕ. Пĕтĕм Союзри çыравçă-хĕрарăмсем пухăнса, хăйсен калпаксе çитнĕ ыйтăвĕсене сÿтсе явнă. Чăваш республикинчен унта Раиса Сарпи поэтесса пулнă. Ăна федераци советне суйланă.

МЕНЛЕРЕХ тĕллев лартнă-ха федераци хăй умне? Пирĕн çĕршывра хĕрарăм çинчен сахал мар юрă юрланă. Анчах унăн пурнăçри пĕлтерĕшне, шухăш-кăмăлне, ĕçне халиччен тивĕçлипе хакламан. Литературăра та унăн вырăнĕ çирĕп пулман. Чи малтанах çак проблемăсене çĕкленĕ федераци членĕсем. Хĕрарăмсем валли çĕнĕ журналсем кăларма палăртнă.

«Анне-кэпе». Тен, çак сăмахсен пĕлтерĕшне халь хăшĕ-пĕри ăнланмасть те пуль. Ку каларăшăн малалли те пур. «Анне-кэпе. Унпа вăрçма юрамасть». Пулас ăру тĕрĕс-тĕкел аталанасси, кăмăл-сипет пуянлăхĕ, çемье çирĕплĕхĕ — пурте хĕрарăмран килет. Хĕрарăм — пурнăç тымарĕ. Обществăн вара пĕлмеллех — мĕнле çăлкуçсенчен чĕрĕлĕх илсе тăрать çак тымар. Паян вăхăт тем тĕрлĕ ыйту, йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ пирĕн ума. Общество ку пулăмсенчен хĕрарăмсене пăрса хăварни, вĕсен сассине илтменни, шухăш-ĕçĕсене шута хумасăр малалла кайма хăтланни тепĕр йăнăш пулĕччĕ.

Иртнĕ кунсенче çак тĕллевсех Чăваш АССР Писателĕсен союзĕнче пулса иртнĕ проза тата ача-пăча секцийĕсен ларăвĕнче ку ыйтусене çĕнĕрен хускатнă. Унта чăваш хĕрарăмĕсем валли «Ĕçхĕрарăмĕ» журнал кăларма хатĕрленмелле тесе йышăннă, обществăлла редколлеги йĕркеленĕ. Пĕтĕм Союзри çыравçă-хĕрарăмсен федерацийĕн Чăваш Писателĕсен союзĕ çумĕнчи уйрăмне йĕркелесе пархатарлă ĕç пуçарнă Раиса Сарпие редактор пулма суйланă. Çамрăк талантсене хăй тавра пуçтарса çырас ăсталăха туптама, пичетре кун çути курмашкăн пулăшма шутлать поэтесса.

Обществăлла редколлегире — О. Денисова, З. Сютрукова, О. Талля, В. Эльпи, М. Мареева, Ю. Силэм, Н. Сильвестрова, Е. Арланова, Л. Федорова, Л. Сачкова, Р. Сарпи. Паллах, ытти изданисем пекех, журнал редколлегирен çеç тытăнса тăмасть, кăмăл тăвакансене ку ĕçе пурне те анлăн хутшăнма чĕнетпĕр. Ытти республикăсен, сăмахран, тутарсен, тахçанах пур çакăн пек журнал. «Азат хатын» («Ирĕке тухнă хĕрарăм») ятлă вăл. Çак журналта çирĕм пилĕк çул редакторта ĕçленĕ тутарсен паллă çыравçи Мадина Маликова — Раиса Сарпин çывăх пĕлĕшĕ, май çитнĕ таран пулăшма пулнă, туслă çыхăну тытма сĕннĕ. Вĕсенчен вĕренмелли сахал мар пулĕ.

«Ĕçхĕрарăмĕ» журнал пирĕн паян пĕрремĕш хут кăларăнмастпăр. 1928—1941 çулсенче тухса тăнă вăл.

...ИР ПУЛАТЬ те, кас пулать — вăхăт шăвать, кун иртет. Ĕçре те ĕç, килте те ĕç. Çиме ларсан та канăç çук — мĕн чухлĕ ăшталанмасть-ши хĕрарăм тени. Кил-çуртне, ачи-пăчине, упăшкине тирпейлет, хăйĕн валли вара час-часах вăй-хал та, вăхăт та юлмасть. Ĕлĕк йывăр пулнă теççĕ. Халь те çăмăлах мар. Аса илер-ха Çеçпĕл Мишшин «Чăваш арăмне» сăввине:

...Камăн вăл кунçулĕ йывăр?
Хурлăхлă кунçулĕ?
Чăваш арăмĕн пулмасăр
Камăн тата пулĕ?
...Турчăка-мĕлкерен урăх
Нимĕн те курман эс,
Сут тĕнче курма тухасшăн
Тăрăшман айван эс.

Ухватпа турчăка халь те чылай чăваш хĕрарăмĕ аллинчен кайман. Тĕпел кукринчен инçете тухса курманнисем те сахал мар. Пур-ха, космоса вĕçнисем те пур çĕршыври хĕрарăмсем хушшинче. Темле чаплă чыс-хисепе тивĕçнисем те, вĕреннисем те сахал мар. Анчах пĕр-пĕрин çинчен мĕн пĕлетпĕр-ха эпир. Аслисем, вăйлисем, культурăн çÿлти шайне çитнисем ыттисене хăйсен хыççăн чĕнчĕр, çул кăтартса пычăр. Çĕнĕ журнал çакна тума чăннипех пулăшĕ. Паллах, вырăсла тухса тăракан «Работница», «Крестьянка» журналсем те пур-ха. Çапах та... Хамăр тăван чĕлхепе вулама та кăмăллăрах, ăнланма та çăмăлрах. Тата хамăр халăхăн манăçа юлса пыракан кĕпе-тумтирне, тĕррисене, апат-çимĕç хатĕрлес ăсталăхне аса илсе çĕнĕтсе аталантарасси пархатарлă ĕç мар-и?

ÇЫН çăкăрпа çеç пурăнмасть.

Пулас журналта çыравçă-хĕрарăмсен сăвви-юрри, калавĕ-повеçĕ пичетленĕç. Общество деятелĕсем сăмах илĕç, тĕнче тата хамăр халăхăн культура деятелĕсемпе, вĕсен пултаруллăхĕпе (чаплă картинисемпе, алăстисен ĕçĕсемпе) паллаштарĕ сире журнал. Çемье, моральпе нравственность, воспитани ыйтăвĕсемпе ятарлă рубрика пулĕ, хĕрарăмсен килти пурнăçĕпе, ĕçри вырăнĕпе интересленĕ, ситменлĕхсенчен пăрăнса иртсе каймĕ.

ЖУРНАЛ МЕНЛЕ ПУЛАССИ вулакансенчен нумай килет. Эсир мĕнле куратăр пулас журнала? Мĕнле ыйтусем хумхантараççĕ сире? Çырусем çырăр, хыпарлăр, — алла ручка тытма ан ÿркенĕр. Вулакансен çырăвĕсем валли уйрăм кĕтес пулĕ — сирĕн ыйтăвăрсене хуравлама специалистсене явăçтарма тăрăшĕ редколлеги.

Пулас журналăн халлĕхе ятарлă ĕç вырăнĕ çук-ха, çавăнпа редколлеги Р. Сарпин хваттерĕнче пухăнать. Çырусене çак адреспа ярăр: г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, д. 48 кв. 53, Р. В. Бородкиной (Сарпи).

Л. САЧКОВА.

Вулаканпа калаçатпăр

КАЯЛЛА ТАВĂРСА ПАНĂ

Ф. Г. ГЕРАСИМОВА,
пенсионера
(Алкеш поселокĕ)

Эсир Алькешре прописккăпа тăратăр, хальхи вăхăтра Хусанти чугун çул çинче ĕçлетĕр. Пенсие тухни 3-мĕш çул пулин те, Сире 1989 çулшăн ялхуçалăх налогĕ (29 тенкĕ) тÿлеттернĕ. Çакăнпа килĕшмесĕр, Эсир Калинин райĕçтăвкомĕн финанс пайне кайнă — унта ыйтăва тивĕçтермен, тетĕр.

Сирĕн çыру çине Чăваш АССР финанс министрĕн заместителĕ Н. В. Смирнов хуравларĕ. Хальхи законодательствăпа килĕшÿллĕн, хулара пурăнакан кашни çынна çурт-йĕрпе (е унăн пайĕпе) тата çĕр лаптăкĕпе усă курнăшăн налог хураççĕ. Ку ялхуçалăх налогĕ шутланмасть. Ялхуçалăх налогне ял çыннисен пĕтĕм хуçалăхĕшĕн, çĕр лаптăкĕ мĕн пысăкăш пулнине кура, тÿлеттереççĕ.

Енчен те çĕр участокĕпе темиçе çын усă курать пулсан, налога уйрăмшарăн хураççĕ. Çурт-йĕрпе çĕр лаптăкĕн хуçисене, вĕсем пенсие тухсан, налог тÿлессинчен хăтараççĕ. 1987—1988 çулсенче Сире, Федор Герасимович, налог тÿлеттермен. Анчах, кирлĕ документсем пулманнипе, 1989 çулшăн налог хурса, Калинин райĕçтăвкомĕн финанс пайĕ тĕрĕс мар тунă. Халĕ çак йăнăша тÿрлетнĕ. Сире налог суммине — 29 тенкĕ те 71 пус почтăпа каялла ярса панă.

ВĂРÇĂРА ВИЛНĔ ПИЧЧЕШĔН

А. Г. ГРИГОРЬЕВĂНА
(Шупашкар районĕ, Тури Макаç ялĕ)

Сирĕн пиччĕр, Анатолий, иртнĕ вăрçăра пуç хунă. Вилнĕ хучĕ те пур. Вăрçăра вилнĕ мăшăрĕшĕн, ывăлĕшĕн нумай çынсăн укçа «тухнă». Сирĕн аçăрпа аннĕр те пурăннă чухне пенси илнĕ. «Халĕ мана вăрçăра вилнĕ пиччешĕн патшалăх укçа тÿлеме тивĕçлĕ-ши?» — ыйтатăр Эсир.

Шупашкар райĕçтăвкомĕн председателĕ В. С. Давыдов çапла ăнлантарса пачĕ: СССР Министрсен Совечĕ 1986 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕнче «Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисене тата вилнĕ çар çыннисен çемйисене çĕнĕ çăмăллăхсем парасси çинчен» йышăннă постановленипе килĕшÿллĕн, çĕршыва хÿтĕлесе е çар службин ытти тивĕçĕсене пурнăçланă чухне вилнĕ çар çыннисен арăмĕсене тата ашшĕ-амăшĕсене, вĕсем пенсионерсем пулсан, пурăнмалли лаптăк, коммуналлă пулăшу, çавăн пекех топливо хакĕн 50 процентне кăна тÿлемелле.

Çапла вара, Алевтина Григорьевна, вăрçăра вилнĕ çыннăн аппăшĕ (е йăмăкĕ) ку çăмăллăхсемпе усă кураймасть.

Готвальд тата Майăн пĕрремĕшĕ ячĕпе хисепленекен урамсен ячĕсене улăштарма палăртнă.

Готвальд памятникĕсене пур çĕртен те илеççĕ. Оломоуц хулинче Ленинпа Сталинăн Октябрьти Социализмлă Аслă революци площадĕнчи 11 метр çÿллĕш скульптурăллă композицине пăснă та вырăнти музей запасникне ăсатнă. Площаде 1969 çулта хăйне-хăй çунтарса янă Палах студент ятне панă.

Массăллă информаци органĕсем тĕлĕшпе те лару-тăру улшăннă. Çĕнĕрен 25 тĕрлĕ хаçат-журнал тухма пуçланă. Çĕнĕрен çуралнă «никама пăхăнманнисем» иртнĕ вăхăтри хаçатсемпе журналсен традицийĕсене вăй кĕртесшĕн. Чехословакири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ кăларса тăнă пилĕк журнала кăларма пăрахнă. Пичет çинчен калакан çĕнĕ закон хатĕрлеççĕ.

Хонеккера ирĕке кăларнă

БЕРЛИН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Ытларикун каçхине ГДР партипе государство руководителĕ пулнă Эрих Хонеккера ирĕке кăларнă.

Çакна Берлинăн хула сучĕн решенийĕпе килĕшÿллĕн тунă. АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ирĕке кăларнă хыççăн Э. Хонеккера тÿрех Бернау çывăхĕнчи чиркÿ учрежденийĕсенчен пĕрне илсе пынă.

Студентсем шанмаççĕ

ТОКИО, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Японири студенчĕсем çĕршыври политика деятелĕсене шанманнине палăртаççĕ.

Токиори Васэда университетĕнче вĕренекен çĕр студентран саккăрăшĕ çеç «вăйлă çынсене» хисепленине кăтартса панă. Асăннă университетран хăй вăхăтĕнче çĕршывăн хальхи премьер-министрĕ Тосики Кайфу вĕренсе тухнă. Çĕршыври паллă «Майнити» хаçат суйлав умĕн ирттернĕ тĕпчевсен результачĕсем ыйтса пĕлнĕ студентсенчен 70 проценчĕ Японии парламенчĕн представительсен палатин февралĕн 18-мĕшĕнче ирттерме палăртнă суйлавне хутшăнма шутламанине кăтартса параççĕ.

Вĕренекенсенчен ытларахăшĕ шутланă тăрах, укçа-тенкĕ политикăра мĕнпур ыйтăва татса парать, çак формулăпа малашне те усă курма тивет. Енчен те çак «услам» пуйма пулăшмасть пулсан, пĕр çын та политикăра ĕçлемен пулĕччĕ, — шутлаççĕ студентсем. Вĕсем влаçра тăракан либерал-демократсен партийĕ обществăн политика системине тĕпрен çĕнетсе улăштарасса ĕненмеççĕ.

Ыйтса пĕлнĕ студентсенчен пĕрре виççĕмĕш пайĕнчен сахалтарах ушкăнĕ консерваторсем майлă пулни çинчен каланă.

Вице-президент пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК. (ТАСС). США вице-президенчĕ Д. Куэйл Эй-би-си телекомпани представителĕпе калаçнă. Дж. Буш президент пекех, эпĕ те ССР Союзне улшăнусен политикине пурнăçа кĕртес ĕçре ÿсĕм тума ырă сунатăп, тенĕ вăл.

ССР Союзĕнчи сепаратистла юхăмсем çине Пĕрлешÿллĕ Штатсем мĕнле пăхни çинчен ыйтсан, вице-президент çапла ответленĕ: «Горбачев Председатель умĕнче пысăк проблема тăрать. Çакнашкал лару-тăрура мĕн тумаллине ăна пирĕн вĕрентме кирлĕ мар. Эпир мирлĕ протестсенчен айккинче тăратпăр, эпир хăйсен шухăшне палăртма тăрăшакан çынсене хÿтĕлетпĕр. Çакă уççăнлăхпа пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăрать. Ман шутпа, пирĕн чикĕсем палăртасси е вĕсене улăштарасси çинчен сăмах хускатмалла мар. Эпир çак ĕçе хутшăнасшăн мар».

«Эстоние, Латвие тата Литвăна Совет Союзĕн обставне кĕртнине США нихçан та тĕрĕс тесе шутламан», — тенĕ вăл.

ЭФИОПИ. Уолло провинцийĕ — Эфиопире чи типĕ районсенчен пĕри. Нумай вăхăт хушши çумăрсем çуманнине пула кунти лару-тăру питĕ çивĕчленсе çитнĕ.

Çанталăк типĕ тăни, çавна май çĕршыв умне тухса тăракан йывăрлăхсене хирĕç кĕрешесси — халĕ пурнăçа кĕртсе пыракан пилĕкçуллăх программин тĕп тĕллевĕ. Тăпра эрозине чармашкăн, акă, тусем айккинче ялхуçалăх культурисем çитĕнтермелли террасăсем тăваççĕ. Çакăнпа пĕрлех государство хресченсен ассоциацине пулăшу парать, вĕсен продукцине реализацилет. 1984—1985 çулсенче çанталăк питĕ типĕ тăнине пула Эфиопире чылай провинци ниχек курнă, пиншер çын вилнĕ. Халĕ çĕршыв правительстви çакăн пек ниχек урăх ан пултăр тесе çине тăрса ĕçлет. Типĕ çанталăк тăракан районсенчен çынсене урăх çĕре куçараççĕ. Çĕнĕ вырăнта вĕсене çурт-йĕрпе, шыпа, ялхуçалăхĕн ĕçĕнне усă курмалли хатĕрсемпе тивĕçтереççĕ, медицина пулăшăвĕ параççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: Уолло провинцийĕнчи Абишу ялĕнчи çăлкуç патĕнче.

АНД-ТАСС фотоÿкерчĕкĕ.

КĔСКЕН ТЕМТЕПĔР

Чăматанра—тимĕр шапасемпе калтасем

БАНГКОК. Тĕнчери çĕршывсен Бангкокри аэропортĕнче пассажирсен багажĕсене тĕрĕсленĕ чухне таможня работникĕсем пĕр çамрăк японецă чăматанĕсене уçса кăтартма ыйтнă. Японец хăйĕн чăматанĕсене уçсан, аэропорт работникĕсемпе туристсем тĕлĕнсе хытса кайнă: вĕсенче 98 тимĕр шапа тата 200 яхăн шыври калта пулнă. Çав чĕрчунсенчен нумайăшĕ — «Хĕрлĕ кĕнекене» кĕртнĕскерсем.

Ача сутакансем

СИНГАПУР. Çак çĕршыва тин çеç çуралнă ачасене сутасси йăлана кĕнĕ. Ачасăр мăшăрсем ачана питĕ хаклă тÿлесе туянаççĕ. «Нью-Пэйпе» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, тин çеç çуралнă арçын ача Америка долларĕпе илсен 8—10 пин доллар, хĕрача 3 пин доллара яхăн тăрать.

Çак «тавара» сутакансем — нумай ачаллă чухăн çемьесем, çавăн пекех харпăр хăйĕн ачишĕн ответлăх туйма пĕлмен 13—19 çулсенчи хĕрарăмсем.

ТАСС.

Ялти почтальон

Çултан çул ытларах

ХУТАРТИ сыхăну уйрăмĕ. Почта машини Шупашкартан çитмен-ха. Почтальонсем вара пурте вырăнта, хаçат-журнал илсе килессе кĕтеççĕ. 1990 çул валли çырăннисен квитанцийĕсене сыхăну уйрăмĕн начальникне Зоя Никитина Романовнăна параççĕ, укçа-тенкĕпе сыхăнна документсене тĕрĕслеççĕ.

— Хаçат-журнал валеççе килтен киле çӳресси машинĕн савăнăç. Куратăп: эсĕ кирлĕ çын, сана пурте кĕтеççĕ, — терĕ Хутарти почтальон Зоя Романовна Викторова.

Вуниçĕ çул вăл почтальонра. Унччен колхозра сысна пăхнă, пилĕк çул фермăра доярка пулнă. Почтальон ĕçĕ унтинчен канăçлăрах пулĕ тесе, сыхăну уйрăмне куçнă та часах туйса илнĕ: фермăри пекех канăçсăр иккен почтальон ĕçĕ. Сивĕре те, çумăрта та ял тăрăх çӳремелле — хаçат-журнал, çыру валеçмелле. Хаçатсем çеç килнĕ кунсенче те сумки тулли те, журналсем валеçнĕ чух пĕтĕмпех йăтса каймасть. Сыхăну уйрăмне тепре килме тивет.

Иртнĕ çул «Коммунизм ялавĕ» хаçата ялта 90 экземпляр сарнă. 1990 çулта тата ытларах илсе тăма пуçларĕç. Унччен çырăнса илменнисем те кăмăл тунă. Кăçал валли çырăнма, акă, Сергей Иванович Десницкий — вырăс çынни, тимĕрçĕ те шут тытнă, Хутара куçса килнĕскер, чăваш чĕлхине вĕреннĕ.

— Ун пек çынсем Хутарта тата пур, — тет Зоя Романовна. — Хама хумхантаракан статьясем пичетленсен, вĕсем çинчен пĕрне те тепĕрне каласа кăтартатăп. Ял çыннисем пурнăçра тĕрлĕ пулăмсем — калăпăр, çемьери хутшăнусем, юрату, çынсен шăпи çинчен çырнă материалсене вулама юратаççĕ. Судпа прокуратура, следстви органĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă статьясене тимлесе вулаççĕ, пĕринчен тепри илтсе, хаçат туяса пама ыйтаççĕ. Çавăн пек статьясем ытларах пичетлĕр-ха, вара «Коммунизм ялавĕ» хаçата çырăнакансен йышĕ тата хушăнĕ, — пĕлтерчĕ Викторова халăх шухăшне.

— «Коммунизм ялавĕ» хаçата чылай сарнăшăн редакци пĕлтĕр мана Хисеп грамоти парса хавхалантарчĕ. Коллектив умĕнче пачĕç те, хĕпĕртенĕскер, киле ăна аллăмрах тытса таврăнатăп. Пĕр çын курчĕ те, ыйтать — кама валли ку чаплă хут, тет. Хама сума суса пачĕç терĕм те, тĕлĕнчĕ, почтальон ĕçне сапла хисепе хуни ушăн кĕтмен япала пулнă курнать, — каласа кăтартрĕ З. Викторова.

Хутарти сыхăну уйрăмĕнчи ытти почтальонсем те республикăри чăвашла хаçатсене çырăнтарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. 1990 çул валли пĕлтĕрхинчен чылай ытларах сарнă.

СЫХĂНУ уйрăмĕн начальникĕ Зоя Никитична Романова, хастар ĕçшĕн редакцин Хисеп грамотине илме тивĕçлĕ пулнăскер, Янташри Полина Михайловна Петрова тата Пилешкассинчи Мария Максимовна Мигунова почтальонсемпе те кăмăллă. Мигунова, сăмахран, почтальонра 23 çул хушши.

Пĕрне кура тепри

ЮМАНАЙПА Турханти сыхăну уйрăмĕсенчи почтальонсене те мухтать районта «Союзпечать» агентстви начальникĕ Мария Михайловна Майорова. «Коммунизм ялавĕ» хаçата пĕлтĕрхинчен ытларах сарнă вĕсем. Сăмахран, Юманайри сыхăну уйрăмне пĕрекен ялсенче кăçал 242 экземпляр илсе тăраççĕ. Вăхăтра килсе парса, хаçатри хăш материалсем уйрăмах интереслине каласа кăтартса, кунти почтальонсем çынсене хаçатпа çывăхлатаççĕ. Юманайĕнчи Раиса Шатаева, Куракассинчи Зоя Мидакова, Уйпуç Ялтăрари Юлия Измайлова почтальон тивĕçне тăрăшса пурнăçлаççĕ.

Турханти сыхăну уйрăмĕн почтальонĕсемпе калаçнă чух акă мĕн асăрхарăм: сĕнетӳ тапхăрĕнче пичетĕн ролĕ палăрмаллах ӳснине лайăх ăнланаççĕ вĕсем. Ку енĕпе тăван чĕлхен пĕлтерĕшĕ пысăк пулнă май, чăвашла хаçатсем сарассине ытларах хаклама пуçланă.

— Унччен çырăнманнисем те «Коммунизм ялавĕ» илсе тăма пуçларĕç, — терĕ Варвара Долгова, почтальонта вунпилĕк çула яхăн ĕçленĕскер. Вăл та, Елизавета Скрипкова, Анфиса Прохорова, Зоя Киргизова, Ирина Иванишкая почтальонсем те ĕçри чăрмавсем пирки пăшăрханса каларĕç.

— Шупашкартан республика хаçачĕсене кирлĕ чухлĕ ярса памаççĕ. Тĕркере сĕр хаçат пулмалла чух час-часах 3—7 экземпляр таран çитмест. Вара çавăн чухлĕ семье хаçатсăр тăрса юлать. Эпир почтальонсем, памастăр тесе, пире кӳренеççĕ. Сăлтавне каласа, пĕр хутĕнче пĕрне, тепринче урăххисене памасăр хăварма тивет.

Айăпĕ — хаçата пичетлесе параканра, хаçат-журнал экспедицийĕнче. Кунта çителĕкле шутласа хумаççĕ. Кăтартнă çитменлĕх Çĕмĕрле районĕнчи почтальонсене кăна мар, ытти районсенчисене те пăшăрхантарать. Çавăнпа экспедици руководителĕсем, ответлăха ӳстерсе, хаçатсене пĕр экземпляр та сахалрах ямалла мар тумалла. Вулакан кашни экземпляршăн укçа тӳленĕ-çке. Айăпсăр почтальонсем пирки ӳпкелешмелле ан пултăрччĕ малашне.

И. МОИСЕЕВ.
Çĕмĕрле районĕ.

ГТО—СЫВЛĂХ НИКĔСĔ

ГТО комплексĕн нумай енĕсене кăçал Чăваш АССРĕн хĕллехи X спартакиадин программине кĕртнĕ. Иртнĕ канмалли кунсенче вара Шупашкарта республикăри финалти ăмăртусем пулса иртрĕç. Старта 21 хулапа районти 140 физкультурник тухрĕ.

Тĕрлĕ çулсенчи, тĕрлĕ çĕрте ĕçлекен çынсене куртăмăр эпир çак ăмăртусенче. Шупашкарти приборсем тăвакан заводра инженер-технологра ĕçлекен В. Ильин, акă кăçалхи январь варринче 57 тултарчĕ. Василий Николаевич çулне кура мар патвар. Хальхи чемпионатра вăл, Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн поликлиникин рентгенологне В. Круглова тата Çĕнĕ Шупашкарти Е. Журавлев инженер-строителе кăшт кăна выляса ярса, аслă çулхи физкультурниксем хушшинче виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Чемпион ятне çĕнсе илнĕ Вячеслав Александрович Круглов пăшал пемелли тирта 100 очко пухма май пур çĕртен 90 очко илчĕ, турник çинче 23 хутчен туртăнчĕ, 5 километрлă дистанцие йĕлтĕрпе 20 минут та 6 çеккунтра чупса тухрĕ. Аслă çулхи хĕрарăмсен ушкăнĕнче Сĕнтĕрвăрринчи вăрман хуçалăх техникумĕнчи А. Семенова лаборантка çĕнтерчĕ.

45—50 çулхи арçынсем хушшинче ГТО комплексĕн нумай енĕпе ăмăртса Вăрнар районĕнчи Санарпуçĕнчи вăтам шкулти Г. Никишов военрук пысăк çитĕнӳ турĕ. Нумай енлĕ кĕрешӳре Георгий Васильевич 144 очко пухрĕ. Çак результат СССР спорт мастерĕн кандидачĕн нормативĕнчен чылай лайăхрах. Иккĕмĕш вырăна Чăваш АССРĕн чемпионĕ ятне вунă хутчен çĕнсе илнĕ В. Байстрюченко (Шупашкарти Ленин районĕ) юлчĕ. Хĕрарăмсен ушкăнĕнче X спартакиадăн чемпионки ятне Шупашкарти чăлхапа трикотаж фабрикинчи М. Матвеева бригадир тивĕç пулчĕ.

Кăçалхи чемпионата Вăрнар районĕн ГТО значкисчĕсем начар мар хатĕрленнĕ. 18—27 çулхи хĕрарăмсен ушкăнĕнче, акă, çивĕч кĕрешӳре пĕрремĕш вырăна 29-мĕш профтехучилищĕре вĕренекен Лариса Никитина йышăнчĕ. Вăрнарсем ялти районсем хушшинче, 13 командăна хыçа хăварса, пĕрремĕш вырăна тухрĕç.

Хуласен ушкăнĕнче Чăваш АССР Госкомспорчĕн куçса çӳрекен кубокне Шупашкарти Калинин районĕн физкультурникĕсем çĕнсе илчĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Çĕнĕ Шупашкар тата Улатăр хулисен командисем йышăнчĕç.

Çĕнтерӳçĕ-команда чысне пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен Т. Краснова, А. Назаров, Н. Углев уйрăмах хастар хӳтĕлерĕç. Вĕсем те — Чăваш АССР чемпионĕсем. Хайсен ушкăнĕсенче пĕрремĕш вырăнсене çавăн пекех Çĕнĕ Шупашкарти В. Петров, А. Лушин, Р. Алексеева, Н. Ульянов, Шупашкарти Ю. Русков, З. Райкова тата А. Григорьев йышăнчĕç.

Оборонăллă-массăллă ĕç уйăхлăхĕ

Çак ăмăртусем Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 72 çул тултарнине халалланă Пĕтĕм Союзри оборонăллă-массăллă ĕç уйăхлăхĕ пуçланнă вăхăтра иртрĕç. Çавна май республикăри чемпионата лайăхрах ГТО комплексĕн значкисчĕсен асĕнче юлмалла ирттерме пулатчех ĕнтĕ. Анчах та республикăри Госкомспортра ĕçлекенсем ăмăртусене çав-çавах ĕлĕкхилле, алăран кайтăр тесе кăна йĕркелеççĕ. Çавăнпа та хальхинче те шайрăксем сахал мар пулчĕç. Пăшал пемелли тирта, акă, кĕтмен туман сĕртен Вăрнар районĕнчи А. Порфирьевăн 4-мĕш шит çинчи мишенĕ çухалчĕ. Çак тĕслĕхе хăшпĕр судьясем вăрнарсене «кура хума» тăрăшнипе кăна ăнлантарса пама пулать. Çапла майпа Александр, турник çинче 42 хутчен туртăннăскер, тата 10 километра йĕлтĕрпе 36 минут та 24 çеккунтра чупса тухнăскер, чемпион ятне çĕнсе илме пултараймарĕ.

Кашни спорт енĕпе тенĕ пекех судьясем çитмерĕç. Çавна пулах спортсменсем иккĕмĕш кунхине те, винтовкăран пересе тата гимнастика упражненийĕсем туса, хăйсем миçе очко çĕнсе илнине тĕплĕн пĕлеймерĕç.

ГТО комплексĕ 30-мĕш çулсенчех комсомол сĕнĕвĕпе çуралнă. Вăл пуринчен малтан çамрăксене Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотне лайăхрах хатĕрленме кирлĕ. Анчах та хăшпĕр хуласемпе районсенче халĕ ГТО комплексне хисеплеменни сисĕнет. Етĕрне, Канаш, Красноармейски, Пĕрĕс, Элĕк, Улатăр районĕсенчен хальхи чемпионата пĕр физкультурник та тăратма пултараймарĕç. Пирĕн шутпа, айăпĕ кунта — чылай районти комсомол тата физкультура организацийĕсен пуçарулăхпа çаврăнăçулăх çитменнинче. Республикăри ăмăртусенче те, акă, эпир юлашки вăхăтра ВЛКСМ обкомĕн ответлă работникĕсене пачах курмастпăр.

ГТО комплексĕ ачасене те, яшсемпе хĕрсене те, аслă çулхи çынсене те, урăхла каласан, пурне те кирлĕ. Кам çак комплекспа туслă, çавă яланах сывă çын, чир-чĕре парăнмасть. Эппин, унăн ĕç тухăçлăхĕ те пысăк, вăл вĕренӳре те хастар. Атьăр-ха ГТО комплексĕпе вăйлăрах туслашар.

Г. ТРОФИМОВ.
СССР спорт мастерĕн кандидачĕ.

АМУР ОБЛАÇĔ. Байкалпа Амур магистралĕ çинче пассажирсем илсе çӳрекен çĕнĕ маршрутсем уçăлнă. Красноярск—Усть-Кут—Амур çинчи Комсомольск—Хабаровск поездпа халĕ БАМăн пĕтĕм участокĕпе тухма пулать. Пассажирсем илсе çӳрекен составсем Нерюнгри хулинчен трассăн Хĕвеланăç участокĕ тăрăх Мускава çитеççĕ, çавна май çул çинчи вăхăт 8 сехете яхăн кĕскелнĕ. БАМ çинче çавăн пекех Тында—Февральск тата Тында—Северобайкальск маршрутсем ĕçлеме тытăннă. Кăçалхи планпа килĕшӳллĕн груз çаврăнăшĕ тăватă хут ытла ӳсмелле.

Ӳкерчĕк çинче: БАМ трасси тăрăх поездсем ытларах çӳреме тытăннă май, çулсене пăхса тăрасси уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çул-йĕр рабочийĕсем О. Горбунов, А. Губарь тата В. Заблоцкий Тында станцийĕн районĕнчи çулсене йĕр-

Поэзи кĕтесĕ

Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ

Тăван кĕтес

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Тăван кĕтес, сана манмарăм,
Ялан асра тытса усрарăм,
Тен, çавăнпах пуçа усмарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Атте-анне килне манмарăм,
Тăван чĕлхем, сана упрарăм,
Чăваш çĕрне ялан мухтарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Инкек сиксе тухсан тармарăм,
Çĕршывăма куç пек сыхларăм,
Ташман хурри пулса юлмарăм.

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Тăванăмсем, сире манмарăм,
Хĕрӳ ĕçре кайри пулмарăм,
Çĕршыв çинчен чунтан юрларăм.

Юрий ВИРЬЯЛ

Мĕнле-ха чун юрламĕ?

Илемлĕ шуçăм ирхине
Çунат çапса хăпарчĕ,
Тин витнĕ çĕн çуртсем çине
Шевле тăкса тултарчĕ.

Карниз çинчи чăваш тĕрри
Хаьл чĕррĕн курăнать-тĕр.
Усмашкăн апăкне яри
Кашни хваттерĕ хатĕр.

Ӳсет кермен, ӳсет квартал,
Ӳсет хула урамĕ.
Çĕнелекен Шупашкарта
Мĕнле-ха чун юрламĕ!

Халапсенчи Чул-паттăрсем
Кунта пиншерĕн мар-и, —
Пуласлăх хĕмĕпе хĕрсе,
Еçе тăраççĕ каррăн.

Мотор кĕвви, çынсен сасси
Янраççĕ кассăн-кассăн.
Килет-ши каман юласси
Ăмăртăва тухсассăн!

Чечеклĕ яшлăх хулине
Çунат сармашкăн вилăн
Вăй-хал парать ĕçченсене
Хĕвеллĕ тус-тăванлăх.

Спорт

Старт хыççăн старт

«Химпром» производство пĕрлешĕвĕн манежĕнче кăçал пысăк пĕлтерĕшлĕ ăмăртусем çине-çинех пулса иртеççĕ.

Çĕршывра мала тухассишĕн иртнĕ эрнере кунта 15—17 çулхи ухăçсем ăмăртрĕç. Финалта 325-шер очко пухса, пĕрремĕш вырăнсене Украина ухăçисем — СССР спорт мастерĕсем Наталья Бурдейнаяпа (Одесса) Иван Казив (Черновцы хули) йышăнчĕç. Шел пулин те, ку хутĕнче призерсен шутĕнче чăваш спортсменĕсене курма пулмарĕ.

Яшсемпе хĕрсем хыççăнах старта çитĕннĕ ухăçсем тухрĕç. Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри ирĕклĕ физкультурăпа спорт обществин Центральнăй Совечĕ ирттерекен чемпионатра 100 ытла спортсмен ăмăртать. М-1 упражненире тĕнче чемпионки пулнă И. Солдатова, тĕнче класлă спорт мастерĕсем — Алма-Атари Я. Тукиянипа Тува автономиллĕ республикинчи Е. Тутачикова хушшинче çивĕч кĕрешӳ пычĕ. Хăшпĕр дистанцисенче лидер Ирина çĕнтерчĕ, анчах та М-1 упражненире вăл, Казахстан хĕрне выляса ярса, иккĕмĕш вырăна юлчĕ.

Арçынсем хушшинче халĕ Эстони командинчи Р. Кихе малта. Шупашкарти СССР спорт мастерĕ Ю. Алексеев — виççĕмĕш вырăнта.

П. ПЕТРОВ.

Пĕр очко

Японире тата Сочире

Çак кунсенче Сочире хăвăрт

Культура хыпарĕсем

Пултаруллисенчен пĕри

Вунă çул каялла Чăваш музыка театрĕнче çамрăк артистка Зинаида Прокопьева ăнăçлă ĕçлеме пуçларĕ. Чи малтан Штраусăн «Летучая мышь» опереттинче вăл хаваслă та савăклă Адель рольне выларĕ, куракансене килĕшрĕ.

Халĕ З. Прокопьева репертуарĕнче кăткăс та пысăк партисем. Акă, Маргарита («Фауст»), Ярославна («Князь Игорь»), Микаэла («Кармен»), Иоланта («Иоланта»), Татьяна («Евгений Онегин») тата ытти рольсем. Çак сăнарсене кăларма пысăк ăсталăх кирлĕ.

Зинаида Прокопьева хăйĕншĕн уйрăмах Сарпи («Шывармань») тата Тайпи («Чакак») сăнарĕсем çывăххине палăртать. Чăваш кĕвви-çемми, тăван чĕлхе, халăх çипуçĕ — çаксем пурте илĕртеççĕ ăна.

З. Прокопьева

ӳснĕ. Мĕн пĕчĕкрен юратнă юрлама-ташлама. Вĕсен çемйинче чăваш халăх юррисене час-часах юрланă. Зина çĕнĕ кĕвве-çемме хăвăрт вĕреннĕ, аслисенчен юлман, часах вăл ялти тĕрлĕ уявсенче юрă пуçлакан пулса тăрать.

Çапах та тӳрех музыка çулĕпе утмасть-ха вăл. Шупашкара килсен, 4 çул пир-авăр тĕртет. Художество пултарулăх коллективĕсене те çавăнсах хутшăнать. Тĕрлĕ конкурссенче, смотрсенче юрлать. Часах Ф. П. Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищине вĕренме кĕрет. Ун хыççăн — Хусанти консерватори.

Халĕ Зинаида Прокопьева — Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки, Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премийĕн лауреачĕ. Республикăри чи паллă юрăçсенчен пĕри вăл.

Актрисăн çĕнĕ ролĕ

Центртан телевидени иртнĕ эрнере икĕ серийллĕ «Зима в раю» илемлĕ фильм кăтартрĕ. Паянхи çамрăксемпе аслисем хушшинчи кăткăс хутшăнусене сăнлакан телефильма Алексей Тимм сценарийĕ тăрăх Александр Бланк кинорежиссер лартнă. Унти тĕп рольсенчен пĕрне — Женя рольне — Шупашкарта çуралса ӳснĕ чăваш хĕрачи Лариса Павлова выларĕ. Маларах куракансем унăн пултарулăхĕпе «Роковая ошибка» кинофильмра паллашнăччĕ. Вăл унта тĕп рольте пулнă.

Вунă çул каялла Чăваш музыка театрĕнче çамрăк артистка Зинаида Прокопьева ăнăçлă ĕçлеме пуçларĕ. Чи малтанах Штраусăн «Летучая мышь» опереттинче вăл хаваслă та евĕклĕ Адель рольне выларĕ, куракансене килĕшрĕ.

Халĕ З. Прокопьева репертуарĕнче кăткăс та пысăк партисем. Акă, Маргарита («Фауст»), Ярославна («Князь Игорь»), Микаэла («Кармен»), Иоланта («Иоланта»), Татьяна («Евгений Онегин») тата ытти рольсем. Çак сăнарсене кăларма пысăк ăсталăх кирлĕ.

Зинаида Прокопьева хăйĕншĕн уйрăмах Сарпи («Шывармань») тата Тайпи («Чакка») сăнарĕсем çывăххине палăртать. Чăваш кĕвви-çемми, тăван чĕлхе, халăх çипуçĕ — çаксем пурте илĕртеççĕ ăна.

З. Прокопьева Етĕрне районĕнчи Мăн Чурашра çуралса ӳснĕ. Мĕн пĕчĕкрен юратнă юрлама-ташлама. Вĕсен çемйинче чăваш халăх юррисене час-часах юрланă. Зина çĕнĕ кĕвве-çемме хăвăрт вĕреннĕ, асĕнчен юлман, часах вăл ялти тĕрлĕ уявсенче юрă пуçлакан пулса тăрать.

Çапах та тӳрех музыка çулĕпе утмасть-ха вăл Шупашкара килсен, 4 çул пир-авăр тĕртет. Художество пултарулăх коллективĕсене те савăнсах хутшăнать. Тĕрлĕ конкурссенче, смотрсенче юрлать. Часах Ф. П. Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищине вĕренме кĕрет. Ун хыççăн — Хусанти консерватори.

Халĕ Зинаида Прокопьева — Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артистки. Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премийĕн лауреачĕ. Республикăри чи паллă юрăçсенчен пĕри вăл.

В. ГРИНЧУК.

ролĕ

Центрти телевидени иртнĕ эрнере икĕ сериллĕ «Зима в раю» илемлĕ фильм кăтартрĕ. Паянхи çамрăксемпе аслисем хушшинчи кăткăс хутшăнусене сăнлакан телефильма Алексей Тимм сценарийĕ тăрăх Александр Бланк кинорежиссер лартнă. Унти тĕп рольсенчен пĕрне — Женя рольне — Шупашкарта çуралса ӳснĕ чăваш хĕрачи Лариса Павлова выларĕ. Маларах куракансем унăн пултарулăхĕпе «Роковая ошибка» кинофильмра паллашнăччĕ. Вăл унта тĕп рольте пулнăччĕ.

А. СНЕЖИНИН.

АМУР ОБЛАÇĔ. Байкалпа Амур магистралĕ çинче пассажирсем илсе çӳрекен çĕнĕ маршрутсем уçăлнă. Красноярск—Усть-Кут—Амур çинчи Комсомольск—Хабаровск поездпа халĕ БАМăн пĕтĕм участокĕпе тухма пулать. Пассажирсем илсе çӳрекен составсем Нерюнгри хулинчен трассăн Хĕвеланăç участокĕ тăрăх Мускава çитеççĕ, çавна май çул çинчи вăхăт 8 сехете яхăн кĕскелнĕ. БАМ çинче çавăн пекех Тында—Февральск тата Тында—Северобайкальск маршрутсем ĕçлеме тытăннă. Кăçалхи планпа килĕшӳллĕн груз çаврăнăшĕ тăватă хут ытла ӳсмелле.

Ӳ к е р ч ĕ к ç и н ч е: БАМ трасси тăрăх поездсем ытларах çӳреме тытăннă май, çулсене пăхса тăрасси уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çул-йĕр рабочийĕсем О. Горбунов, А. Губарь тата В. Заблоцкий Тында станцийĕн районĕнчи çулсене йĕркеллĕ тытма тăрăшаççĕ.

В. Саяпин фотоӳкерчĕкĕ.
(ТАСС фотохроники).

ĕçе тăраççĕ каррăн.

Хĕвеллĕ тус-тăванĕн.

Спорт **Спорт**

Старт хыççăн старт

«Химпром» производство пĕрлешĕвĕн манежĕнче кăçал пысăк пĕлтерĕшлĕ ăмăртусем çине-çинех пулса иртеççĕ.

Çĕршывра мала тухассишĕн иртнĕ эрнере кунта 15—17 çулхи ухăçсем ăмăртрĕç. Финалта 325-шер очко пухса, пĕрремĕш вырăнсене Украина ухăçисем — СССР спорт мастерĕсем Наталья Бурдейнаяпа (Одесса) Иван Казив (Черновцы хули) йышăнчĕç. Шел пулин те, кун хутĕнче призерсен шутĕнче чăваш спортсменĕсене курма пулмарĕ.

Яшсемпе хĕрсем хыççăнах старта çитĕннĕ ухăçсем тухрĕç. Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри ирĕклĕ физкультурăпа спорт обществин Центральнăй Совечĕ ирттерекен чемпионатра 100 ытла спортсмен ăмăртать. М-1 упражненире тĕнче чемпионки пулнă И. Солдатова, тĕнче класлă спорт мастерĕсем — Алма-Атари Я. Туниянпа Тува автономиллĕ республикинчи Е. Тутачикова хушшинче çивĕч кĕрешӳ пычĕ. Хăшпĕр дистанцисенче пирĕн Ирина çĕнтерчĕ, анчах та М-1 упражненире вăл Казахстан хĕрне выляса ярса, иккĕмĕш вырăна юлнă.

Арçынсем хушшинче халĕхе Эстони командинчи Р. Киило малта. Шупашкарти СССР спорт мастерĕ Ю. Алексеев — виççĕмĕш вырăнта.

П. ПЕТРОВ.

«Янра, хуткупăс!»

Çакăн пек ятпа иртрĕ Комсомольски районĕнчи фестиваль. Анат Тимĕрчкассинчи Культура çуртне çав кун халăх йышлă пухăнчĕ. Ватăсем те, вăтам çулхисем те, çамрăксем те, вĕренекенсемпе шкул çулне çитменнисем те пур кунта. Пурте «Янра, хуткупăс!» фестиваль курма килнĕ.

Чаршав уçăлсан, чи малтан сцена çине шурутсем тухрĕç. Тăхăр арçын, купăспа каласа, тĕрлĕ çемĕсем янратрĕç. Хурăн хуппипе ăста шăхăрни, шыв янă тĕрлĕ кĕленчесемпе, кашăксемпе усă курни номерсене тата витĕмлĕрех тума пулăшрĕ.

Лидия Михайловнăпа Николай Никитич Маковсем — пилĕк ача ашшĕ-амăшĕ. Паллах, вĕсене пур çĕре те ĕлкĕрме çăмăлах мар пулĕ. Анчах юрă-ташăпа туслă пулни çак мăшăра çемьере те, ĕçре те пулăшать. Николай Никитич купăспа ăста калать, Лидия Михайловна такмаксем нумай пĕлет, ташлать. Хальхинче те вĕсем курса ларакансене хăйсен пултарулăхĕпе тĕлĕнтерчĕç.

И. Т. Рябчиков та — ăста купăсçă. Такмаксем калама та, чăваш халăх юррисене юрлама та пултарать вăл. В. А. Голубев, В. А. Маков, Г. Ф. Ильин, В. А. Рябчиков, П. Г. Козлов, В. Ф. Козлов купăс каласа çынсене савăнтарчĕç.

Валентина Григорьевна Соколова — ĕç ветеранĕ, 65 çула çывхарса пырать. Мария Марласова репертуарĕнчи юрăсене юрлама пуçласан вара татах çамрăкланса, илемленсе каять.

Сергей Просвирнов — «Заветы Ильича» колхозри чи пултаруллă трактористсенчен пĕри. Пушă вăхăтра вăл алла хуткупăс тытать, асамлă кĕвĕ тĕнчин тыткăнне лекет. Ялти Культура çуртĕн сцени çинче вĕсем мăшăрĕпе сахал мар юрă юрласа çынсене савăнтарнă.

ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔ

Фестивальте вăл, хăех купăс каласа, «Сакки те сарă сарлака», «Ăста каян, чĕкеç, çумăр витĕр» тата ытти юрăсене шăрантарчĕ.

Таня Шуряшкина ачаранах юрă-кĕвĕпе туслă. Вăл шкултан чухнех хăй тĕллĕн купăс калама вĕреннĕ, районти тата республикăри юрăçсен конкурсĕсене хутшăннă.

Сцена çинче — асанкассисем. Халăх инструменчĕсен ансамблĕ кĕвĕ хыççăн кĕвĕ калать. Курса ларакансене Маргидановсен çемье ансамблĕ, Елена Маштанова такмаксем каласа-юрласа савăнтарчĕç.

Киров поселокĕнчи Галина Филипповăпа Галина Сожаева та такмаксем калама ăста. Вĕсем пуканесен ансамблĕн вăййине кулăшла та интереслĕ кăтартрĕç.

«Дружба» колхозра чăвашсемпе тутарсем килĕштерсе ĕçлессĕ, туслăн пурăнаççĕ. Çакă вĕсем хатĕрленĕ номерсенчен те аван курăнчĕ. Минсалим Фаряхов, Альфат Идрисов, Ферит Зинетуллин воин-интернационалистсем юратупа мар тата туслăх çинчен тутарла юрларĕç, шӳтлĕ ташă ташласа пачĕç.

Сцена çине Хирти Явăшри вăтам шкул директорĕ В. М. Яковлев виççĕмĕш класра вĕренекен хĕрĕпе — Нальăпа тухрĕ. Надя пĕр аркăллă чăваш кĕпипе, умне шурă саппун çакнă, пуçĕнче — тухъя. Ашшĕ купăс калать, усă сасла хĕрĕ такмак каласа юрлать.

«Красный Октябрь» колхозран килнĕ артистсем те пысăк пултарулăхпа палăрчĕç.

Владимир Моторин «Заря» колхозри «Çамрăксен моди» кооператива ертсе пырать. Вăл юрă-ташăпа туслă. Унăн аллинче купăс выляса çеç тăрать. Володьăн мăшăрĕпе йăмăкĕ — икĕ Вера — хитрен такмаклаççĕ. Тукайри Прокопьевсен çемье ансамблĕ «Шăпчăк юрри» юрларĕ.

Юлашкинчен жюри итогсене пĕтĕмлетрĕ. Çемье ансамблĕсем хушшинче Шуряшкинсемпе Моторинсем чи пултаруллисем пулчĕç. Купăсçăсенчен Сергей Просвирнов, Сергей Алексеев, Анатолий Школьников пĕрремĕш-виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç. Такмакçăсенчен Киров поселокĕнчи пуканесен ансамблĕпе тата Шурутри Илья Рябчикова çитекенни пулмарĕ.

Халăх инструменчĕсен ансамблĕсенчен шурутсем, асанкассисем тата «Дружба» колхозри кашăкçăсем палăрчĕç.

З. СОЛОВЬЕВА.

Пĕр очко кăна

«Сокол» çĕршыври хоккей чемпионачĕн черетлĕ турĕсенче çĕнĕ çултан пуçласа хăнара вылянă. Юлашки икĕ турта вăл Пензăри тата Липецкри командăсемпе тĕл пулнă. Пензăра «Сокол» икĕ матчĕнче те вырăнти «Дизелиста» выляса янă — 3:6 тата 1:4.

Липецкра пĕр-пĕрне лайăх пĕлекен командăсем хушшинчи матчсем питĕ çивĕч кĕрешӳре иртнĕ. Малтанхи кун вăйă шучĕ чылайччен 1:1 пулнă. Матч вĕçленес умĕн «Трактор» «Сокол» хапхине шайба çапса кĕртнĕ. Çĕнĕшупашкарсем 1:2 шутпа выляса янă. Иккĕмĕш тĕлпулу 5:5 шутпа вĕçленнĕ.

В. КРЫСИН.

Японире тата Сочире

Ăста кăна ăмăртмаççĕ пулĕ çак кунсенче пирĕн ăста спортсменсем! «Шупашкарти промышленность тракторĕсен заводĕ» производство пĕрлешĕвĕнче ĕçлекен В. Егорова, акă, иртнĕ вырсарникун Японири Осака хулинче марафон дистанцийĕнче старта тухнă.

Пĕтĕм тĕнчере йăлана кĕнĕ çак ăмăртăва вуншар çĕршыври темисе пин марафонец хутшăннă. Хĕрарăмсен ушкăнĕнче пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнсене Португалири Роса Мота (вăл Олимп вăййисен тата тĕнче чемпионки) тата Японири Катсуо Хьюдо йышăннă. Вĕсем хыççăнах финиша чăваш хĕрĕ Валентина Егорова çитнĕ. Унăн результачĕ — 2 сехет те 29 минут та 47 секунт — Чăваш АССРĕн çĕнĕ рекорчĕ.

Çак кунсенчех Сочире хăвăрт утассипе Россия Федерацийĕн хĕллехи чемпионачĕ пулса иртнĕ. Кунта та пирĕн çăмăл атлетсем начар мар результатсем кăтартнă. Шупашкарта тĕнче класлă спорт мастерĕ Сергей Титов динамовец 20 километра 1 сехет те 24 минут та 04 çеккунтра утса тухнă, пуçласа РСФСР чемпионĕ ятне çĕнсе илнĕ. Унăн командăри юлташĕсем Анатолий Филипповпа Анатолий Никитин çак дистанцирех СССР спорт мастерĕн нормативне пурнăçланă.

Ситес канмалли кунсенче чи вăйлă çăмăл атлетсем Челябинскри манежра çĕршывăн хĕллехи чемпионатĕнче ăмăртаççĕ.

П. СИДОРОВ.

Ăнăçлă ăмăртнă

Çĕнĕ Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 1-мĕш спорт шкулĕнче вĕренекенсем январьте Ростов облаçĕнчи Шахта хулинче кросс чупассипе Россия Федерацийĕнче мала тухассишĕн ирттернĕ ăмăртусене хутшăннă. Вĕсенчен виççĕшĕ Совет Союзĕнче мала тухассишĕн февральте Запорожьере ирттерекен ăмăртусене хутшăнма тивĕçлĕ пулнă.

8-мĕш вăтам шкулта вĕренекен Елена Шарова 1500 метра чупса пĕрремĕш вырăна тухнă. Мускаври коопераци институчĕн Шупашкарти филиалĕн пĕрремĕш курсĕнче вĕренекен Татьяна Максимова 3000 метрлă дистанцие пуринчен малтан вĕçленĕ. 9-мĕш профтехучилищĕре вĕренекен Галина Усова çак дистанцирех иккĕмĕш пулнă.

О. ОСИН.

Редактор А. П. КАЗАНОВ.

ÇАНТАЛĂК

Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх, паян кăнтăрла пирĕн республикăра улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, кăштах юр çăвать, тăман вĕçтерет. Çил кăнтăр-хĕвеланăçĕнчен çеккунтра 3—8 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури 2—7, Шупашкарта 4 градуса çити сивĕ пулать.

Кун тăрăшшĕ 8 сехет те 36 минут. Хĕвел 17 сехет те 2 минутра анать.

ТЕЛЕВИДЕНИ

КĔÇНЕРНИКУН

ПĔРРЕМĔШ ПРОГРАММА

6.30 — 120 минут.
8.35 — Мультфильмсем.
9.05 Фильм-концерт.
10.05 — Ача-пăча сехечĕ (акăлчанла).
11.05 — «Двенадцать стульев». Тăватă сериллĕ илемлĕ телефильм. 4 сери.
12.25 — Коллаж.
12.30 — Вăхăт. ТСН.
13.00 — Концерт-очерк.
15.30 — Концерт.
15.50 — «Солдатские мемуары». 1-мĕш фильм — «Истребитель танков».
17.05 — Халăх кĕввисем.
17.20 — Валерий Балабанов планети.
17.50 — Фильм-концерт.
18.30 — Вăхăт. ТСН.
19.00 — 16 тултарманнисем тата унтан аслăраххисем.
19.40 — «Двенадцать стульев». Тăватă сериллĕ илемлĕ телефильм. 4 сери.
21.00 — Вăхăт. ТСН.
21.30 — Çивĕч ыйтупа илнĕ интервью.
21.40 — «КВН—89». Финал Январĕн 1-мĕшĕнче панă передача.
22.35 — «Литературная Россия» хаçатри материалсемпе паллаштараççĕ.
22.50 — П. И. Чайковскин виççĕмĕш симфонийĕ.
23.50 — ТСН.

ИККĔМĔШ ПРОГРАММА

8.00 — Ирхи гимнастика.
8.15 — Наукăллă-популярлă фильм.
8.35 — 11.05 — Вĕренӳ передачисем.
11.05 — Атте, анне тата эпĕ.
12.05 — Документлă телефильм.
13.30 — Ритмикăллă гимнастика.
14.00 — «Хлеб — имя существительное». Телефильм. 8 сери.
17.00 — Мультфильм.
17.20 — Республика кунĕ (Шуп.).
17.30 — Чăваш АССР халăх контроль комитетĕнче. (Шуп.).
17.45 — Республика кунĕ (Шуп.).
17.55 — Хĕрарăмсем валли. «Сенкер тăпел». (Шуп.).
18.00 — Ритмикăллă гимнастика.
18.30 — Вăхăт. ТСН (сурдокуçарупа).
19.00 — Фигурăсем туса ярăнасси. Европа чемпионачĕ. Ленинградран.
20.00 — Ырă кaç пултăр, ачасем!
20.15 — «Мир Пастернака». 2-мĕш передача.
21.15 — Павел Флоренский çинчен.
21.30 — «Дама с собачкой». Илемлĕ фильм.
23.00 — «Юрмала—90». Совет эстрадин юррисене юрлакан çамрăк юрăçсен Пĕтĕм Союзри V конкурсĕн регионти тапхăрĕ. Горькирен.

РАДИО

КĔÇНЕРНИКУН

ПĔРРЕМĔШ ПРОГРАММА

6.15 — «Столица курьерĕ». Шупашкар çыннисем валли. 6.30 — «Виç минутсăр çур сехет». Информаципе публицистика программи. 156-мĕш Муркаш суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР халăх депутатне суйлама тăратнă кандидатпа В. Г. Даниловпа калаçни. 6.55 — Пĕлтерӳсем. 7.00 — 7.15 — Мускав передачисем. 7.15 — 7.30 — Республика хаçачĕсене пăхса тухни. 16.30 — 17.30 — «Клавиши, клавиши». (стерео). 18.00 — Çĕнĕ хыпарсем 18.12 Ачасем валли. «Хăрушла урок». Радиопостановка. 18.25 — Республика хыпарĕсем. 18.35— Сăмахăм — парти çинчен. Уçă радиопуху. 19.00 — 19.45 — Мускав передачисем. 19.45 — Халăха контроллесе тăма. 20.10 — 20.45 — А. Токарев. 5-мĕш симфони.

ТЕАТР

К. В. ИВАНОВ ЯЧĔПЕ ХИСЕПЛЕНЕКЕН ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ДРАМА ТЕАТРĔ — февралĕн 1-мĕшĕнче «Качча каяссăм килет» комеди, февралĕн 2-мĕшĕнче «Амантнă чун» драма, февралĕн 3-мĕшĕнче «Айдао» драма.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО МУЗЫКА ТЕАТРĔ — февралĕн 1-мĕшĕнче «Тысяча и одна ночь» балет, февралĕн 2-мĕшĕнче «Шывармань» опера, февралĕн 4-мĕшĕнче 11 сехетре «Щелкунчик» балет.

Спектакльсем 19 сехетре пуçланаççĕ.

КИНО

«СЕСПЕЛЬ» — Кăвак зал: «Люби и верь» 9.00, 11.45, 14.30, 17.15, 20.00. Хĕрлĕ зал: «Нечистая сила» 9.00, 11.30, 14.10, 17.00, 20.00. Кинозал: «Кулаки во тьме» — 16.00, 18.00, 20.00.

«ОКТЯБРЬ» — «Люби и верь» — 10.30, 13.00, 15.30, 18.00, 20.30.

«ПОБЕДА» — Пысăк зал: «Смиренное кладбище» — 10.30, 12.30, 14.30, 16.30, 18.30, 20.30. Вăтам зал: «Ночные воришки» 10.00, 12.00, 14.00, 16.00, 18.00, 20.00. Пĕчĕк зал: «Побег» — 9.00, 11.00, 13.00, 15.00, 17.00, 19.00, 21.00.

«МИР» — «Месть и закон» 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 20.15.

«СОКОЛ» — «Меня зовут Арлекино» 11.45, 17.00; «Зита и Гита» 9.00, 14.10, 19.30.

«ЛУЧ» — «Талисман» — 14.00; «Зеленый луч» — 16.00, 18.00, 20.00.

«ЮНОСТЬ» — «Как три мушкетера» 15.00, 17.30, 20.00.

«СТРОИТЕЛЬ КЛУБ — «Жизнь по лимиту» — 16.00, 18.00, 20.00.

ВИДЕОЗАЛ (тел.: 24-37-02, 24-59-95) — «Большой улов» — 18.00.

ПИРĔН АДРЕС:
428019, г. ЧЕБОКСАРЫ,
пр. ИВАНА ЯКОВЛЕВА, 13.
ДОМ ПЕЧАТИ, III ЭТАЖ.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор — 21-00-67; редактор заместителĕсем — 21-04-17 тата 21-20-07; ответлă секретарь — 21-04-26; секретариат — 25-13-01; парти пурнăç пайĕ — 21-08-61 тата 25-13-24; идеологи пайĕ — 21-03-54 тата 25-13-18; промышленность, строительство тата транспорт пайĕ — 21-33-64, 25-13-04 тата 25-13-81; агропромышленность пайĕ — 21-08-62, 25-13-10, 23-13-05; советсен ĕçĕпе социаллă пурнăç пайĕ — 21-03-04 тата 25-13-06; культура пайĕ — 21-08-56 тата 25-13-02; çырусемпе обществăлла корреспондентсен пайĕ — 21-05-21, 25-13-07 тата 29-76-22; информаципе спорт пайĕ — 21-72-31 тата 25-13-09; фотокорреспондент — 21-45-94; хамăр корреспондентсем — 3-24-91 (Канаш), 2-10-54 (Елчĕк), 4-34 (Етĕрне) тата 2-26-30 (Сĕнтĕрвăрри); издательство директорĕ — 21-00-23; пĕлтерӳсен пайĕ — 21-14-89 тата 29-76-89; «Вестник недели» редакцийĕ — 21-04-39; бухгалтери — 21-45-86; Чăваш АССР Журналистсен союзĕн правленийĕ — 25-13-83; хаçатăн обществăлла приемнăйĕ — 21-22-94.

Хаçат тунтикунсăр пуçне куллен тухать.

НТ 35083.

Индекс газеты — 54800. Типография издательства Чувашского обкома КПСС, г. Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13. Высокая печать, объем 2 печ. листа. Тираж 72.000 экз. Заказ № 552.